ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЧĂВАШ ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ ÇОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

166 (9845) № | 1956 çулхи августăн 16-мĕшĕ, кĕçнерникун | Хакĕ 20 пус. 39-мĕш çул тухать.

Парторганизаци вăйĕ—массăпа тачă çыхăнса тăнинче

Партин пĕтĕм пурнăçĕпе ĕçĕнче пуçламăш организацисем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пуçламăш организацисем предприятисенче, МТС-семпе колхозсенче, учрежденисенче партин политикипе решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн пыракан кĕрешĕве ертсе пыракансем пулса тăраççĕ. Коммунистсен партийĕ çавăнпа яланах хăйĕн пуçламăш организацийĕсем çине таянса ĕçлет.

Анчах ĕçсыннисен анлă массисемпе тачă çыхăнса тăракан пуçламăш парторганизаци кăна хăйĕн ертсе пырас рольне ăнăçлă пурнăçласа пыма пултарать. Партин пуçламăш организацийĕ, тенĕ КПСС Уставĕнче, рабочисем, хресченсен тата интеллигенци массисене партин ертсе пыракан органĕсемпе çыхăнтарса тăрать.

Республикăри нумай пуçламăш парторганизацисем партипе правительствăн решенийĕсемпе директивисене пурнăçа кĕртес тĕллевпе ĕçсыннисен анлă массисене воспитани параççĕ, вĕсене пĕтĕçтерсе организацилесе пыраççĕ. Улатăрти пăравуссем юсакан заводри парторганизаци, сăмахран, производство енĕпе тухса тăракан мĕнпур çивĕч ыйтусене рабочисен анлă массисемпе пĕрле татса пама тăрăшать. Заводра партин уçă пухăвĕсем тăтăшах пулса иртеççĕ. Вĕсенче партире тăман рабочисем производствăна лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне малалла ÿстерсе пыма паха сĕнÿсем параççĕ. Заводри парторганизаци рабочисем хушшинче производствăлла тата политикăлла темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем тăтăш иртересшĕн йĕркеленĕ. Партире тăман рабочисемпе, инженерсемпе тата техниксемпе тачă çыхăнса ĕçлесе, парторганизаци пĕтĕм коллективна производство заданийĕсене ăнăçлă пурнăçлама мобилизацилет. Завод коллективĕ кăçалхи çичĕ уйăхри производство планне иртерсе тултарчĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхозри пуçламăш парторганизаци колхозниксен анлă массисемпе тачă çыхăну тытнипе хăйĕн влиянине артельти мĕнпур участоксене сарчĕ. Колхозра кĕрхи культурăсене хăвăрт, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, çак кунсенче çурхи культурăсене выраса пĕтереççĕ. Авăн çапас, пирвайхи тивĕçе пурнăçлас—государствăна тырă парса татас ĕçсенче колхозниксем пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. Колхозниксен хуçалăхĕсем пурте тенĕ пекех государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пурнăçланă.

Массăсен политикăлла активлăхне, ĕçри хастарлăхне ÿстересси, вĕсен творчествăлла вăйне промышленноçпа ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилесси—парторганизацисен хисеплĕ тивĕçĕ. Анчах хăшпĕр парторганизацисем ĕçсыннисен анлă массисемпе тачă çыхăну тытмаççĕ. Вĕсем çавăнпа рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин ÿссе пыракан активлăхне вăхăтра асăрхамаççĕ, хăйсен ĕçне производствăра малта пыракан çынсене явăçтармаççĕ. Ишлей районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци, сăмахран, колхозниксен массипе, партире тăман активпа начар çыхăннă. Кунта партин уçă пухăвĕсем сайра хутра кăна пулса иртеççĕ. Уçă пухусене партире тăман актива сахал хутшăнтараççĕ. Ку çес те мар. Вĕсенче малта пыракан дояркăсене, свинаркăсене тата фермăсенчи ытти работниксене пачах курма сук. Колхозниксемпе тачă çыхăну тытса ĕçлемен пирки ĕнтĕ колхоз производстви кирлĕ пек аталанаймасть. Пĕтĕр колхоз сухалакан кашни гектартан илнĕ тупăшĕ 214 тенкĕ çеç пулнă. Кăçалхи вунă уйăхра, пĕлтĕрхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ĕнесенчен сĕт икĕ хут сахалрах суса илнĕ. Хальхи вăхăтра тырпул пухса кĕртес, авăн çапса государствăна тырă парас ĕçсем ÿрĕк-сÿрĕк пулса пыраççĕ.

Парторганизацисемпе массăсем хушшинчи çыхăнăва тĕреклетсе пырас тесен, ĕçсыннисен кашни ушкăнĕпе ĕçлеме пĕлмелле, вĕсем хушшинче политикăлла ĕçе тĕрĕс йĕркелени кирлĕ. Çапах та, хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем çак уйрăмлăха шута илеймеççĕ. Улатăр хулинчи 4-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж управленийĕнче квалификациллĕ рабочисем нумай ĕçлеççĕ. Унта производствăна анчах пынă хĕрарăмсем те, вăтам пĕлÿ илнĕ çамрăксем те чылай. Рабочисем хушшинче хăйсене тĕрĕс мар тыткалакан, ĕç дисциплинине час-часах пăсакан çынсем те пур. Апла пулин те, управленири парторганизаци политикăлла пĕтĕм ĕçе çак уйрăмлăха шута илмесĕр туса пырать. Парторганизацири агитаторсем рабочисене уйăхра икĕ-виçĕ хутчен хаçатсем вуласа панипех çырлахаççĕ.

Профсоюз, комсомол тата обществăлла ытти организацисен ĕçне лайăхлатни массăсемпе тытакан çыхăнăва вăйлатма пулăшать. Рабочисен, колхозниксен, служащисен массисене пĕрлештерсе тăракан çак организацисенчен чылайăшĕ ĕçсыннисене воспитани парас, вĕсене пĕрлештерсе пĕтĕçтерес тата организацилес тĕлĕшпе нумай ĕçсем туса иртереççĕ. Анчах хăшпĕр парторганизацисем профсоюз организацийĕсен ĕçĕпе пачах сахал интересленеççĕ, комсомолецсемпе çамрăксене воспитани парас енĕпе япăх ĕçлеççĕ. Ку вăл вĕсем профсоюзпа комсомол организацийĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăрас правăпа усă курманнинчен килет. Çакăнпа килĕшме май çук: Пуçламăш парторганизацисен ĕçсыннисен массăлла организацисен ĕçĕпе куллен интересленмелле, вĕсене ĕçре пулăшу парса тăмалла, ĕçсыннисен мĕнпур вăйне КПСС XX съезчĕ промышленноçа, ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе палăртнă программăна чыслăн пурнăçлама мобилизацилемелле.

Çакна палăртмалла: шел пулин те, партин хăшпĕр хула комитечĕсемпе райкомĕсем пуçламăш парторганизацисене массăсемпе тытакан çыхăнăва тĕреклетсе пыма сахал пулăшаççĕ-ха. Вĕсем пуçламăш парторганизацисен отчечĕсене сÿтсе явнă чухне парторганизаци партире тăман активпа мĕнле ĕçлесе пынипе интересленмеççĕ. Çак çитменлĕхе пĕтермелле. Партин хула комитечĕсемпе райкомĕсен пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене ĕçсыннисен творчествăлла пуçарăвне пĕтĕм вăйпа аталантарса пыма, массăсемпе çирĕп çыхăну тытса ĕçлеме вĕрентсе пымалла.

Партин нумай пуçламăш организацийĕсен массăсем хушшинче ĕçлес тĕлĕшпе пуян опыт пур. Вĕсем предприятисенчи, колхозсенчи, МТС-семпе совхозсенчи хальхи ĕçсене активлăрах хутшăнма пуçларĕç. Задача çакăнта пулать: парторганизацисемпе массăсем хушшинчи çыхăнăва малашне те тăтăшах вăйлатмалла, массăсене вĕрентме тата вĕсенчен вĕренме пĕлмелле. Çакна çине тăрса пурнăçа кĕртсе пыни кашни предприятипе колхоз, МТС, стройка, учреждени умĕнче тăракан пысăк та ответлă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама май парать.

Сталино хулинчи Петровски районĕнчи çĕр кăмрăк промышленность работникĕсен канашлăвĕ

СТАЛИНО, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Челюскинецсен ячĕпе тăракан 1-мĕш номерлĕ шахтăра Сталино хулинчи Петровски районĕнчи çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсенчи тĕп профессиллĕ рабочисен, сăрт-ту мастерĕсен, участоксемпе шахтăсен начальникĕсен тата парти организацийĕсен секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Канашлăва пухăннă çынсем «Сталинуголь» трест шахтисемпе участокĕсен ĕçĕсем çинчен пĕр-пĕрин шухăшне калаçса панă, çĕр кăмрăк кăларассине ÿстерме пулăшакан сĕнÿсем тăратнă.

Канашлура 5-мĕш номерлĕ «Трудовская» шахтоуправленин навалоотбойщикĕ Г. Г. Гордиенко, Челюскинецсен ячĕпе тăракан 1-мĕш номерлĕ шахтăра транспорт енĕпе ĕçлекен электрослесарь Я. В. Сирота, 5-мĕш номерлĕ «Трудовская» шахтоуправленин сăрт-ту мастерĕ Н. Я. Щербак, 5-БИС номерлĕ «Трудовская» шахтăри участок начальникĕ С. Н. Чепеленко, 7-мĕш номерлĕ «Трудовская» шахта начальникĕ М. А. Шмыгин, 4—21-мĕш номерлĕ шахта начальникĕ А. З. Астрахань, Челюскинецсен ячĕпе тăракан 1-мĕш номерлĕ шахта начальникĕ В. М. Фомин, 10-мĕш номерлĕ «Чекист» шахтăри парторганизаци секретарĕ Н. Г. Грибов тата ыттисем тухса каланă. Вĕсем шахтăсенче çĕр кăмрăк кăларассине ÿстерме, сăрт-ту техникипе усă курас ĕçе лайăхлатма мĕнле майсем пурри çинчен каланă, ĕçе лайăхрах организацилес, ĕç укçи тÿлемелли йĕркене лайăхлатас тĕлĕшпе сĕнÿсем панă.

Канашлу ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ, Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. И. Кириченко юлташ, СССР Çĕр кăмрăк промышленность министрĕ А. Н. Задемидко юлташ, СССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсем тăвакан строительство министрĕ Л. Г. Мельников юлташ, партин Сталино обкомĕн секретарĕ И. П. Казанец юлташ хутшăннă.

КПСС ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ «УЙРĂМ ÇЫННА ЫТЛАШШИ ПЫСĂКА ХУНИНЕ ТАТА УНĂН СИЕННЕ ПĔТЕРЕССИ ÇИНЧЕН» ЙЫШĂННĂ ПОСТАНОВЛЕНИЕ ЧĂВАШЛА УЙРĂМ КĔНЕКЕ ТУСА КĂЛАРНĂ

Чăваш АССР государство издательстви КПСС Центральнăй Комитечĕ «Уйрăм çынна ытлашши пысăка хунине тата унăн сиенне пĕтерессиçинчен» йышăннă постановление чăвашла уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

Тăван сĕршывра



Жданов. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче Донбасс çĕр кăмрăкне тиесе кайма çак порта Югославин 10 карапĕ килнĕ. Вĕсене пурне те палăртса хунă срокчен тиесе ăсатнă.

Ÿкерчĕк çинче: Жданов портĕнче «Прень» карапа çине çĕр кăмрăкĕ тиеççĕ.

П. Кашкель фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ПАХА ТЕПЛОВОЗСЕМ

Харьковри транспорт машинисен завочĕн коллективĕ виçĕ секциллĕ пĕрремĕш магистральнăй тепловоз туса кăларнă.

Çакнашкал ытти локомотивсемпе танлаштарсан, ку тепловозăн пĕр секци нумайрах. Машина хăвачĕ 6 пин лаша вăйĕпе танлашать. Çакă вăл икĕ секциллĕ «ТЭ-3» тепловоз хăватĕнчен пĕр хут çурă пысăкрах. Машинист мĕнпур секцисен ĕçне пĕр вырăнтан йĕркелесе тăрать.

Харьковпа Красный Лиман хушшинчи участокра сăнаса пăхнă чухне виçĕ секциллĕ тепловоз, пăравуспа танлаштарсан, виçĕ хут йывăртарах состав туртса пынă. (ТАСС).

ПЫСĂК ВĂРМАНПРОМХОЗ

Карелири нумай вăрманлă Пудож районĕнче çĕнĕ вăрманпромхоз — Пяльма вăрманпромхозĕ тума тытăннă. Вăл пирĕн çĕршыври чи пысăк хуçалăх пулать. Тĕп ĕçсене ситес çул çурă хушшинче туса пĕтерме палăртнă. 1958 çулта çĕнĕ вăрманпромхоз çулсеренех 800 пин кубометртан кая мар йывăç касса турттарса кăларма пуçлать.

Вăрман хатĕрлекен çĕнĕ предприятин чĕр тавар питĕ нумай. Унăн вăрманĕсенче пĕрремĕш сортлă йывăç запасĕ 20 миллион кубометра яхăн шутланать. Кăçал Пяльма вăрманпромхозĕ 250 пин кубометра яхăн йывăç касса турттарать. (ТАСС).

ИРКУТСК ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИЙĔ ВАЛЛИ ИККĔМĔШ ГИДРОГЕНЕРАТОР

Новосибирскри турбогенератор завочĕн коллективĕ Иркутск гидроэлектростанцийĕ валли 82,5 пин киловат хăватлă иккĕмĕш гидрогенератор туса хатĕрленĕ. Ăна 4 уйăх хушшинче, пĕрремĕшĕнчен чылай хăвăртрах, туса пĕтернĕ.

Çак гидроэлектростанци валли тепĕр машинăна татах та кĕскерех срокра туса хатĕрлеме палăртнă. (ТАСС).

БЕЛОРУССИРЕ ТĂВАКАН СТАНОКСЕМ

Витебскри Киров ячĕпе тăракан станоксем тăвакан завод Львов хулинчи велосипед заводне велосипед деталĕсем якатмалли станок-автомат ярса панă. Вăл тĕрлĕ тăватă станокшăн ĕçлет. Агрегатăн детальсене якатнă вăхăтра автоматла виçмелли хатĕр пур. Çак предприятирех пир-авăр тĕртекен машинăсен йĕннисене якатса хатĕрлемелли çурма-автомат туса кăларнă. Çакнашкал 5 станок кивĕ конструциллĕ 7 агрегат чухлĕ ĕç тăвать.

Çулталăк пуçланнăранпа завод çĕнĕ йышши 8 автоматпа çурма-автомат туса хатĕрленĕ. (ТАСС).

Пĕчĕк юханшывсем çинчи электростанцисем

Украинăра нумай гидроэнерги пама пултаракан пĕчĕк юханшывсем пиншер километр тăршшĕ юхса выртаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ колхозсене, машина-трактор станцийĕсене тата совхозсене электрификацилемелли хăватлă никĕс пулса тăнă. Çак юханшывсем çинче 1.300 гидроэлектростанци ытла тунă. Вĕсем ялхуçалăх производствине механизацилеме май параççĕ.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра пĕчĕк гидростанцисем тăвас ĕç татах та анлăрах сарăлать. Рось, Кăнтăр Буг, Горный Тикич, Збруч шывĕсенче ыттисем çинче электростанцисем тăваççĕ.

Нумай колхозсем, хăйсен вăйĕсене пĕрлештерсе, пысăк электростанцисем лартаççĕ. Сăмахран, Винница облаçĕнчи 47 колхоз 1.500 киловатт хăватлă Чернятски гидроэлектростанцие тунă. Çак облаçра халĕ 100 ытла колхоз Ладыш гидроэлектростанцине тума тытăннă. Вăл 7,5 пин киловатт хăватлă пулать.

Халĕ ĕнтĕ Украинăра ялсенче колхозсем пĕрлешсе тунă гидроэлектростанцисем 100 ытла шутланаççĕ. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра республикăри ялсенчи гидроэлектростанцисен пĕтĕм хăвачĕ 30 хут ытла ÿснĕ. (ТАСС).

Малта пыракан ткачиха примерĕпе

Дзержинский ячĕпе тăракан Трехгорнăй мануфактура комбиначĕн цехĕсенче ĕçе мĕнле организацилеине тата оборудованипе мĕнле усă курнине тĕрĕслеççĕ. Çакна май ĕç тухăçлăхне ÿстермелли çĕнĕ резервсем палăраççĕ. Вĕсемпе пĕлсе усă курас ĕçре Валентина Андриашина ткачиха паха тĕслĕх кăтартать. 12 жаккардовăй станокпа ĕçлесе, вăл ĕç нормине кунсеренех 13—15 процент иртерсе тултарать; ткачиха туса кăларакан пĕтĕм продукци—пĕрремĕш сорт.

Çулталăк пуçланнăранпа çак малта пыракан текстильщица 50 пин метр ытла çурма-пурçăн пир тĕртсе кăларнă, Андриашина планран иртерсе тĕртсе кăларнă пир-авăртан кăна 1.200 хĕрарăм кĕпи çĕлеме пулать.

Новатор ĕçĕн чи лайăх меслечĕсене предприятири мĕнпур ткачихăсем вĕренеççĕ. (ТАСС).

Çĕнĕ приборсем пулăшнипе

Червячнăй кустăрма—Мускаври шлифовальнăй станоксен заводĕнче туса кăларакан зубошлифовальнăй машинăсен чи ответлă пайĕсенчен пĕри. Çак детале тĕрĕслеме нумай вăхăт кирлĕ пулнă, виçĕ контролер ĕçленĕ. Халĕ ку ĕçе пĕр контролер 35—40 минут хушшинчех туса пĕтерет. Кунта контролера хамăрăн çĕршывра туса кăларнă çĕнĕ прибор пулăшать.

Çавăн пекех ультразвуковой дефектоскоп ятлă прибор та производствăра пысăк усă кÿрет. Вăл пысăк детальсен ăшĕнчи хăвăлсене, çурăксене тата ытти çитменлĕхсене палăртма пулăшать.

Производствăри тĕрлĕ ĕçсенче тĕрĕслемелли-виçмелли çĕнĕ аппаратурăна ăнăçлă усă кураççĕ. Оптика промышленноçĕ туса хатĕрленĕ «ИЧ-2» аппарат пулăшнипе завод туса кăларакан станоксен якатнă пайĕсен тасалăхне тĕрĕслесе пĕлес ĕçе 3—4 хут хăвăртлатнă. Пысăк мар, çĕклесе çÿреме меллĕ çак аппарат детальсен çийĕн тасалăхне микронăн пуннăмĕш пайĕ таранах тĕрĕс палăртма май парать. (ТАСС).

Искусственнăй кристалсем—техникăра

Пĕтĕм Союзри промышленность выставкинче СССР Наука академийĕн стенчĕ умĕнче курма пынă çынсем яланах нумай. Унта рабочисем, колхозниксем, учительсем, студентсем приборсемпе, диаграммăсемпе тата наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсем çинчен каласа паракан ытти материалсемпе паллашаççĕ.

Анă кристалсем ÿстермелли установка моделĕ. Вăл пурне те питĕ интереслентерет. Çавăн пек установкăсем пулăшнипе ученăйсем искусственнăй кристалсем тăваççĕ. Кристалсемпе техникăн питех те тĕрлĕ отраслĕсенче усă кураççĕ.

СССР Наука академийĕн кристаллографи институчĕн работникĕсем çĕнĕрен çĕнĕ йышши кристалсем туса вĕренсе пыраççĕ. Çав шутра техникăра усă курмалли хаклă йышши чулсем вырăнне усă курма юрăхлă кристалсем те тăваççĕ.

Стенд çинче искусственнăй кварц курма пулать. Радиотехника приборĕсем, виçмелли тата ытти йышши приборсем тунă çĕре каякан çак хаклă кристала «ÿстерме» нумай вăй хурса тăрăвнă.

Кварцпа юнашарах радиоактивлă хумсене тытма пултаракан люминесцентнăй кристалсене курма пулать.

Çутçанталăкра питех те тĕрлĕ кристалсем те тĕл пулаççĕ. Кристалсене тĕпчесе пĕлес ĕçре ученăйсем лайăхрах та лайăхрах меслетсемпе: рентгенографипе, электронографипе усă кураççĕ. Çак меслетсемпе мĕнле усă курнине кристаллографи институчĕн экспозицийĕ кăтартса парать. (ТАСС).

Шкул ачисене вĕренме пулăшакан фильмсем

РСФСР Çутĕç министерствин фондĕнче шкул ачисене вĕренме пулăшакан тĕрлĕ кинокартинăсем 400 ытла шутланаççĕ. Вĕсене урокçем вăхăтĕнче е занятисем хыççăн кăтартаççĕ. Çак фильмсем ачасене хăйсем вĕренекен предмета тĕплĕнрех ăнланса илме пулăшаççĕ.

Кăçал татах 24 кинокартина ÿкерсе кăлараççĕ.

Кĕнеке историйĕ çинчен каласа паракан фильмра тăваттăмĕш класри ачасем типографи мĕнле ĕçленине, текста мĕнле наборланине, кĕнекесене мĕнле илемлетсе кăларнине тата ыттине те курма пултараççĕ. «Хура тинĕс хĕрри» ятлă картина пирĕн Тăван çĕршывăн çак илемлĕ кĕтесĕ çинчи çутçанталăкпа, унта ÿсекен йывăç-курăкпа, унти хуçалăхпа паллаштарать. Тăваттăмĕш класра вĕренекен ачасем валлиех «Тимĕр тăпри тата унран мĕн тăваççĕ», «Этем çилпе мĕнле усă курать» ятлă картинăсем ÿкерсе кăларнă.

Аслă классенче вĕренекенсем валли химия тата физика енĕпе ÿкернĕ картинăсем, çутçанталăк çинчен тата наука çитĕнĕвĕсемпе промышленноçра мĕнле усă курни çинчен каласа паракан фильмсем ÿкереççĕ. Астрономи даннăйĕсемпе судносем çÿретес ĕçре, авиацире, метеорологире усă курнине кăтартакан фильмсем ÿкерсе хатĕрленĕ. Вуннăмĕш класра вĕренекенсем валли «Оптика заводĕнче» ятлă фильм пулать.

Этем анатомине вĕренекен шкул ачисем валли юн çаврăнăшĕпе составĕ çинчен каласа паракан фильмсем ÿкерсе кăларнă. Зоологи енĕпе «Сĕт паракан выльăхăн костромски ăрачĕ», «Кăшлакан чĕрчунсем—ялхуçалăхне сиен кÿрекенсем» ятлă фильмсем хатĕрлеççĕ.

А. Н. Островский пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса паракан пысăк кинокартина та хатĕр. (ТАСС).

Мускав юханшывĕ урлă хывакан Çĕнĕ Арбат кĕперĕ.

А. Сергеев фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Куйбышев облаçĕ. Новокуйбышевскри нефть завочĕ çулталăкри плана срокчен тултарма, заданирен иртерсе çĕршыва 50 пин тонна çурă нефть продукчĕсем, пĕр пин тонна пысăк пахалăхлă çусем туса пама обязательство илнĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнипе кăна предприяти 3,5 миллион тенкĕ услам илет. Кунта установкăсене пĕрре юсанă хыççăн тепре юсиччен тапхăра тăсассишĕн ăмăртаççĕ. Ăмăртура 1-мĕш номерлĕ атмосферно-вакуумнăй установка коллективĕ пысăк çитĕнÿ тунă. Çак установкăна тĕпренех юсанăранпа вунă уйăх иртнĕ пулсан та, вăл лайăх ĕçлет.

Ÿкерчĕк çинче: цехри дежурнăй инженер А. А. Митрофанова аслă оператора П. И. Пушина кăтарту парать.

И. Семин фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ИНДОНЕЗИ ХУДОЖНИКĔСЕН КАРТИНИСЕН ВЫСТАВКИ

Августăн 13-мĕшĕнче Мускавра Индонезири художниксен картинисен выставки уçăлнă. Выставка экспоначĕсене ССР Союзĕнчи Совет художникĕсен союзĕн оргкомитечĕн выставка залĕнче вырнаçтарнă.

Выставка уçнă çĕре унта столицăри искусство деятелĕсем — художниксем, скульпторсем, архитекторсем йышлăн пынă. Хăнасем хушшинче—Индонези Республикин ССР Союзĕнчи вăхăтлăх поверенăйĕ Амрам господин, Индонези посольствин представителĕсем, ССР Союзĕн Индонезири послĕ Д. А. Жуков, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсем енĕпе ĕçлекен пайĕн заведующийĕ Б. М. Волков.

Выставкăна уçнă чухне Урăх çĕршывсемпе культурăлла çыхăнусем тытакан Пĕтĕм Союзри общество правленийĕн председателĕн заместителĕ Г. М. Калишьян çакна палăртнă: выставка Индонезипе Совет Союзĕ хушшинчи культура тĕлĕшĕнчи çыхăнусене вăйлатма пулăшакан çĕнĕ паха ĕç пулса тăрать. Вăл художниксен ăсталăхне кăтартса парать, Совет Союзĕпе туслă пурăнакан, ĕçе, ирĕклĕхе юратакан халăх çĕршывĕн пурнăçĕпе паллаштарать.

Выставка Индонези халăхĕн праçникне—Индонези Республика пулса тăни çинчен пĕлтернĕ куна паллă тăвас умĕн уçăлни çинчен каласа, оратор Индонези художникĕсене хăйсен творчествăлла ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума, Индонези халăхне мирлĕ ĕçлесе пурăнма, телейлĕ пулма ырă суннă.

Унтан Индонези Республикин ССР Союзĕнчи вăхăтлăх поверенăйĕ Амрам господин тухса каланă. Ăна пурте ăшшăн кĕтсе илнĕ.

— Çак выставка,—тенĕ вăл,—совет çыннисене пирĕн çĕршывпа кăштах та пулин паллаштарĕ. Эпĕ çакна шанса тăратăп: пĕр-пĕрин çĕршывĕсен культурипе паллашса, халăхсем пĕр-пĕрне татах та лайăхрах ăнланса пĕç. Пĕр-пĕрне ăнланни тачă çыхăнса, килĕштерсе ĕçлеме май парать.

Унтан выставкăна пынă çынсем выставка экспоначĕсене — картинăсене, ÿкерчĕксене, фотографисене, йывăçран илемлетсе тунă япаласене, тĕрĕсене курса çÿренĕ. (ТАСС).

МАМОНТ КĔЛЕТКИ

Арктика тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн Шалауров сăмсахĕ çинчи экспедицийĕн начальникĕ географи наукисен кандидачĕ Г. В. Горбацкий унта мамонт кĕлетки тупни çинчен пĕлтернĕ. Ăна Новосибирск утравĕсен архипелагĕнчи Пысăк Ляхов утравĕн хĕвелтухăç енчи вĕçĕнче тупнă.

Темиçе пин çул каялла пурăннă çак чĕрчун кĕлетки лайăх сыхланса тăнă. Вăл наукăшăн питĕ интереслĕ. Арктикăра, Новосибирск утравĕсем çинче, мамонт шăммисене тупни мамонт мĕнле условисенче пурăнни çинчен, çав вăхăтри йывăç-курăкпа климат çинчен çĕнĕ сведенисем пухма май парать.

Мамонта Пысăк çĕр. çине илсе килме атарласа экспедици организацилама шутлаççĕ. (ТАСС).

Комбайнер юлташсем! Тырпул пухса кĕртес ĕçри ăнăçлăх сирĕнтен килет

Комбайнерсен ăмăртăвĕ

Республикăри комбайнерсем хушшинче тырпула хăвăртрах тата тирпейлĕ пухса кĕртессишĕн социализмла ăмăрту вăйлан-са пырать. Чылай комбайнерсем тырпула çĕнĕ меслетпе — çулса пултарса пухса кĕртме лайăх вĕренсе çитрĕç, пысăк лаптăксем çинчи тырпула çак майпах вырса пухрĕç. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне ăмăрту-ра çак комбайнерсем уйрăмах лайăх ĕçле-нине палăртмалла.

Комбайнер хушамачĕ	МТС-сем	Мĕн гектар вырнă
«С-6» комбайнпа		
Т. И. Иванов	Канаш	310
Н. Ф. Яковлев	Елчĕк	273
Н. С. Спиридонов	Вăрмар	272
М. И. Широков	Етĕрне	270
«С-4» комбайнпа		
М. Т. Тихонов	Шупашкар	264
А. И. Иванов	Канаш	250
Н. С. Вашуров	Сĕнтĕр	240
К. П. Петров	Советски	228
А. С. Сергеев	Шăхасан	222
В. Кудряшов	Чурачăк	220
А. М. Ильдеев	Советски	208
А. С. Павлов	Елчĕк	201
«Коммунар» комбайнпа		
И. Л. Лукианов	Елчĕк	158
М. И. Илларионов	Вăрмар	118

Комбайнер юлташсем! Тырпул пухса кĕртес ĕçри ăнăçлăх сирĕнтен килет. Халĕ пĕр кун кая юлни тăкаксем нумай-рах пуласси патне илсе пырать. Çавăн-па сирĕн кашни сехетпе туллин усă кур-са ĕçлемелле, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пы-малла. Канаш МТС-ĕнчи Т. Ивановпа А. Иванов, Шупашкар МТС-ĕнчи М. Ти-хонов, Вăрмар МТС-ĕнчи Н. Спиридонов, Сĕнтĕр МТС-ĕнчи Н. Вашуров тата ытти юлташсем пек ĕçлесси — республикăри кашни комбайнерăн хисеплĕ тивĕçĕ.

Ăмăртăва вăйлатсах пырăр, комбайнер юлташсем!

Государствăна тырă парса татнă

МУРКАШ. (Телефонпа). Районти колхоз-сем государствăна тырă парас ĕçе хăвăрт-латса пыраççĕ. Тăван çĕршыв умĕнчи пирвайхи тивĕçа пурнăçлас тĕлĕшпе уйрă-мах Чапаев ячĕпе, Сталин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан тата «Красный Октябрь» колхозсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Иртнĕ çулсенче Чапаев ячĕпе тăракан колхоз районта чи кайра пынă. Государ-ство умĕнчи обязательствăсене артель чле-нĕсем вăхăтра пурнăçлайман. Вăтăр пин шучĕпе килнĕ В. Ильин юлташ ертсе пыма тытăннăранпа колхозри ĕçсем тĕпренех улшăнчĕç. Кăçал Чапаев ячĕпе тăракан колхоз государствăна обязательнăй йĕрке-пе тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕ-пе тырă памалли плана августăн 10-мĕшĕ тĕлне 100,2 процент тултарчĕ, районта пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Халĕ артель го-сударствăна закуп шучĕпе тырă сутать.

Сталин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан тата «Красный Октябрь» колхозсем те го-сударствăна тырă памалли плана срокчен тултарчĕç. Ĕнер «Красный Октябрь» кол-хоз хатĕрлев пунктне закуп шучĕпе 50 центнер тырă леçсе пачĕ.

«Динамо», «Знамя коммунизма» колхоз-сем те тырă памалли плана пани-ыранах тултараççĕ.

П. ПАВЛОВ.
(Хамăр корр.).

Канаш районĕнчи «Красная Армия» колхоз

Ÿкерчĕк çинче: А. Рыжова юлташ кукурузăран силос хывакан колхозниксем па-тĕнче кану вăхăтĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн çĕнĕ номерне вуласа парать.

Çулса пăрахнă тырă выртать— çапма васкамаççĕ

ОКТЯБРЬСКИ. Районти малта пыракан колхозсем уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă пурнăç-ласа пыраççĕ. «Звезда» колхоз кĕрхи ты-рăсене ултă кун хушшинче пухса кĕртрĕ. Халĕ кунта çурхи тырăсене кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. «Аниш» тата Киров ячĕпе тă-ракан артельсем те кĕрхи тырăсене вырса пĕтерчĕ, халĕ çуртри выраççĕ. Асăннă колхозсем авăн çапас тата государствăна тырă парас енĕпе те ырă тĕслĕхсем кă-тартаççĕ. «Аниш» колхозра МТС моло-тилки авăн çапать, ку таранччен артель хатĕрлев пунктне пурĕ 255 центнер тĕш-тырă леçнĕ, тырă памалли плана 50 про-цент ытла тултарнă. Колхоз членĕсем, Ставрополь крайĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕ-сен чĕнĕвĕпе хавхаланса, государствăна тырă августăн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр парса татма тăрăшаççĕ. Артельте тран-спорт бригади ĕçне лайăх организациле-нĕ, унта ĕçлеме пултаруллă колхозниксене уйăрнă. Киров ячĕпе тăракан, «Красный Октябрь» колхозсем те государствăна ты-рă вăхăтра леçсе тăраççĕ, плана кĕске срокра ирттерсе тултарассишĕн пĕтĕм вăя хураççĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, районта уй-хирти тырпула вăхăтра пухса кĕртес, авăн çапас, государствăна тырă парас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ, уяр çанталă-кăн кашни сехечĕпе туллин усă курмаççĕ. Молотов ячĕпе тăракан, «Волгарь» тата «Культура» колхозсенче, сăмахран, кĕрхи тырăсем вырса пĕтермен, çав вăхăтрах ва-ра артельсен уй-хирĕсенче çурхи тырă-сем пур лаптăксенче те пулса çитнĕ, вăна пĕр тăхтамасăр вырма тытăнмалла.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра кĕрхи тырăсене лафетлă жаткăсемпе çулса пă-рахнă, вăна уйрăм лаптăксенче подборщик-лă комбайнпа пухса çапнă. Халĕ тата 20 гектар çинчи ыраша пухмалла, Çумăрлă çанталăк тăнине пула, вăл шăтса кайма та пуçланă ĕнтĕ, анчах А. Горшков ком-байнер хăйĕн ĕçне тивĕçлипе пурнăçласа пымасть. Вăл, комбайнăн копнителĕ ван-нă пирки, виç-тăватă кун хушши ĕçле-месĕр ларать. Комбайн кăçал пурĕ те 70 гектар çинчи тырпула кăна вырнă. Прав-лени председателĕ М. Матвеев юлташ кун çинчен МТС дирекцине çийĕнчех пĕлтер-нĕ, анчах МТС руководителĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. А. Горшков юлташ ме-ханизаци шкулĕнчен вĕренсе тухман, хă-йĕн ĕçне начар пĕлет, апла пулин те ди-рекци ăна комбайнер пулма уйăрса лартнă.

«Волгарь» колхозра та тырпул пухса кĕртес ĕç начар пырать. Халĕ кунта тата 100 гектара яхăн ыраш вырса пух-малла. Артель правленийĕ ĕç дис-циплинине аплăхтарса янине пула, ты-рă вырма 350 çынтан куллен 200 çын ытларах кăна тухаççĕ. Уй-хирти тырпула пухса кĕртес ĕçре колхоза машина-трак-тор станцийĕ те çителĕксĕр пулăшать. Артельте ĕçлекен комбайнсене тĕрлĕ сăл-тавсемпе час-часах ытти колхозсене ку-çараççĕ, унтан каллех каялла илсе ки-леççĕ. Çапла, кунта Степановпа Долгов юлташсен комбайнĕсене «Культура» кол-хоза çак кунсенче икĕ-виçĕ хут куçарса кайнă.

Артельте авăн çапас ĕç те юлса пырать, государствăна тырă памалли плана ку таранччен 30 процента яхăн кăна тул-тарнă.

«Культура» колхоз членĕсем кăçал уй-хирти тырпула иртнĕ çулхинчен чы-лай иртерех тата пĕр тăккаламасăр вырса пухма сăмах панăччĕ. Анчах колхозник-сем хăйсен сăмахне начар пурнăçлаççĕ. Кĕрхи тырăсене вырса пĕтермен. Артель правленийĕ авăн çапас ĕçе те организа-цилеме тăрăшмасть, государствăна тырă парасси вăраха каять.

Октябрьски районĕнчи колхозсен уй-хирти тырпула вăхăтра пухса кĕртме, авăн çапса государствăна кĕске срокра тырă парса татма майсем çителĕклĕ. Каш-ни колхозра тенĕ пекех комбайнсем ĕçлеç-çĕ, авăн çапма МТС-ăн «МК-1100» йыш-ши молотилкăсем 16 пур. Вĕсемпе тухăçлă ĕçлени государство умĕнчи тивĕçе вăхăт-ра тата пысăк пахалăхпа пурнăçлама май парĕччĕ.

КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн тата МТС дирекцийĕн организаторла ĕç-сене вăйлатмалла, районти кашни колхоз уй-хирти тырпула хăвăрт та тăккалама-сăр пухса кĕртме, авăн çапса государствă-на тырă памалли плана кĕске срокра пурнăçлама пултартăр.

В. ТРОФИМОВ.

Хаклă минутсем

Николай Васильев комбайнера Пăла хулине тырă леçекен автомашинăсен шавĕ вăратрĕ. Вăл сасартăк сиксе тăчĕ те, сывăхри пакку патне пырса, тулă пуча-хĕсене тенисе хутчĕ те тыта-тыта пăхрĕ.

— Чăрăрех иккен, тепĕр сехетрен пуç-тарса çапма юрать,—шухăшларĕ комбай-нер, агрегат патне пырса.

Часах хĕвел хăпарчĕ. Сыранăн тепĕр енче çамрăк вăрман пек курăнса ларакан кукуруза тĕмĕсем лăпкă çил вĕрнипе чăштăртатса илчĕç.

Сывлăм типсе çитнĕ-çитменех комбайн еринпен хускалчĕ те хир тăрăх мăнаçлăн шума пуçларĕ. Подборщик барабанĕн йĕп-писем çулнă тулла пĕр тикĕс пуçтарса пыраççĕ. Часах бункер та тулать.

— Николай, чар-ха комбайнна, тырă пушатар!—харăсăн кăшкăраççĕ бункер умĕнче тăракан Л. Карсаковăпа Л. Заха-рова колхозницăсем.

— Комбайна чармастăп, бункерти тул-ла михĕсене тултарăр, вĕсене лайăх çыхнă хыççăн аякки пăрахса пырăр!—мотор шавĕ витĕр илтĕнет комбайнер сасси.

Нумаях та вăхăт иртмест, комбайн хы-çĕнче михĕ хыççăн михĕ выртса юлма пуçлать. Вĕсене тырă турттаракансем лавсем çине тиесе ăсатаççĕ.

17 гектар çинчен вырса пăрахнă тулла пĕр кун хушшинче пуçтарса кĕртме шут тытнă вăл иккен. Комбайн пĕр минут та чарăнса тăмалла мар.

Кăнтăрла умĕн хĕвеланăç енчен нÿрĕ çил вĕрме пуçларĕ, хура пĕлĕт ярăмĕсем хĕвеле хупласа илчĕç. Çапах, кĕтнĕ ин-кек, çил тепĕр енчен вĕрме пуçларĕ, вăл хура пĕлĕтсене Сĕве шывĕ еннелле сирсе ячĕ.

Кăнтăрлахи апат хыççăн та Васильев агрегачĕ пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕ. Мĕн ир-тен пуçласа каçчен бункертан сарă тулă пĕр вĕçĕмсĕр юхса тăчĕ.

Каçхине, хĕвел сăрт хыçне пытаннă хыççăн, комбайн çулнă тулла пуçтарса пĕ-терчĕ. 15 сехет хушши пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ! Комбайнер иртнĕ кунсенче агрегат чарăна-чарăна ĕçленине аса илчĕ те, хăйне хăй ятлама пуçларĕ.

— Мĕн шухăша кайса тăратăн, Василь-ев! 17 гектар çинчи тулла пĕр кун хуш-шинче пухса кĕртнĕ хыççăн та кăмăл тул-марĕ-и вара?—сасартăк илтрĕ вăл колхоз председателĕн сассине.

Шухăша путнăскер, вăл Свердлов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. А. Мура-тов комбайн патне пынине те сисмен-мĕн.

— Паянхи ĕçшĕн кулянмастăп-ха эпĕ, Андрей Александрович, иртнĕ кунсенче усăсăр сухатнă хаклă минутсемшĕн пă-шăрханатăп. Ĕнер эпĕ 14 гектар тыррине пухса кĕртрĕм, паян 17 гектар çинчен. Мĕн чăрмантарнă-ха мана иртнĕ кунсенче паянхи пек ĕçleме?

— Тĕрĕс калатăн, — килĕшрĕ унпа колхоз председателĕ,—эпир кашни минут-на тĕрĕс усă курма тивĕçлĕ.

Часах вĕсем патне трактор бригадин бригадирĕ Александр Иванов пырса тухрĕ. Вăл сывлăх суннă хыççăн, комбайнера çи-тес кунсен ĕçĕн планĕпе паллаштарчĕ.

— Ыран сĕлĕ вырма пуçлатăр, ун-ччен подборщика илсе хĕдера вырнăçтарса лартас пулать,—терĕ бригадир.

Кăçал Васильев 132 гектар çинчи тыр-ра подборщикпа вырса пуçтарчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл çурхи тырăсене вырса çапма ха-тĕрленет. Васильев комбайнера çитĕнÿсем туma ĕçри хаклă минутсене перекетлеме тăрăшни нумай пулăшĕ.

Н. ДОБРОХОТОВ.

Елчĕк районĕ.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Тырпул пухса кĕртес ĕç организаторĕ

Чкаловски районĕнчи колхозсем, çураки умĕн Елчĕк районĕнчи ялхуçалăх работ-никĕсемпе ăмăртăва тухса, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кашни 100 гектар çĕр пуçне 60 центнер сĕт, 15,5 центнер аш-какай илессишĕн кĕрешеççĕ. Районти «Авангард» хаçат ма-териалĕсенчен вĕсем çак хĕрÿллĕ тапхăрти экзамена ăнăçлă тытни курăнать.

Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте механиза-торсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Мĕнпур тĕштырăсенчен çуррине ытла МТС техни-кипе пухса кĕртмелле. Çакна асра тытса, комбайнерсен ĕçне тĕрĕс организацилесси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Тырă вырма тухас умĕн хаçат «Комбайнер» ят-лă умстатья пичетлерĕ.

«Комбайнер юлташсем! — тенĕ ум-статьяра.—Кăçалхи сезонта сирĕн 17.730 гектар тĕштырă, вăл шутра 3.600 гектар-пе çулса пултарнă меслетпе вырса пухмал-ла. «С-6» комбайнпа 400 гектартан кая мар, «С-4» комбайнпа—350 гектартан кая мар тырă вырса пухмалла, ĕç паха-лăхĕшĕн кĕрешмелле».

Хаçат хăйĕн страницисенче «Малта пы-ракан комбайнерсен семинарне» органи-зациленĕ. Семинар участникĕсен материа-лĕсене номĕртен номере парса пыраççĕ. Тырпул пухса кĕртме хатĕрленнĕ кунсен-че Н. Якупов, А. Зайцев, К. Валеев, Н. Владимиров тата М. Валиуллин комбай-нерсен статьисене пичетлерĕç.

Якупов юлташ хăйĕн статьинче «С-6» агрегата ĕçе мĕнле хатĕрлени çинчен тĕп-лĕн каласа панă. Хаçат пулăшнипе унăн опычĕпе МТС-ри ытти комбайнерсем те усă курнă. «Лайăх меслет» статьяра А. Зайцев юлташ тырпула çулса пултарса пухса кĕртессине пропагандăлать.

«Çĕнĕ меслетпе ĕçлесе,—тесе çырать вăл хăйĕн статьинче, — эпĕ кăçал «Пер-вомайск» колхозра 400 гектар çинчен пурĕ 6 пин центнер тырă çапса илесси-шĕн кĕрешетĕп».

Комбайнерта вунултăмĕш çул ĕçлекен К. Валеев юлташ çĕнĕ меслет çинчен çыр-нă статьяра интереслĕ даннăйсем илсе кăтартать. Пĕлтĕр вăл Ленин ячĕпе тăра-кан колхозра 21 гектар çинчи вире, 38 гектар çинчи пăрçана çулса пултарса пухса кĕртнĕ. Çĕнĕ меслетпе пухса кĕртнĕ участокри пăрçа, ялхи пек ĕçленĕ уча-стоксенчен, гектар пуçне 5 центнер ытла-рах тухнă.

Хаçатăн пĕр номерĕнче «Комбайна та-лăкĕпех ĕçлеттеретпĕр», ятлă статья пи-четленĕ. Унăн авторĕ — Днепропетровск облаçĕнчи Ново-Московски МТС-ĕн ком-байнерĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ Г. Байда юлташ. Районти механизаторсене çĕршыв-ри чаплă комбайнерăн паха опычĕпе пал-лаштарни усăллă пулчĕ.

Редакци механизаторсем мĕнле ĕçлени-пе куллен сăнаса тăрать: лайăх ĕçлекен-сене мухтать, начар ĕçлекенсене—кри-тиклет. Хаçатăн юлашки номерĕсенчен пĕрринче «Феми Абитов комсомолец агре-гатĕнче» ятлă материал тухрĕ. Пултарул-лă та пуçаруллă механизатор ÿсĕмĕн туп-сăмне автор лайăх çырса кăтартать. Феми хăйĕн комбайнне юсанă чух унăн пайĕсе-не хăшпĕр улшăнусем кĕртнĕ. Тĕслĕхрен, вăл тырă тасатакан пая урăхлатса çĕ-нетнĕ, ăна кăштах çÿлерех хăпартса выр-наçтарнă.

— Вăхăтпа туллин усă курнипе тата техникăна пĕр кăлтăксăр ĕçлеттернипе ав-густăн 4-мĕшĕ тĕлне 149 гектар тырă вырнă, 1.650 центнер тырă çапса кăлар-нă,—пĕлтерет автор çамрăк механизато-рăн малтанхи кунсенчи результачĕ çин-чен.

Ун хыççăнхи кунсенче çамрăк механи-затор татах вуншар гектар вырнă, — çакăн çинчен хыпарлаççĕ «Правда» кол-хозран.

Тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех асăрхани, вĕсене сивĕччĕн критиклени ĕçе лайăхлатма пулăшать. Рейд бригади çырса кăларнă «Хаклă вăхăта сая яраç-çĕ» материалта сăмахран, «Кзыл Юлдуз» колхозра тырă вырас ĕçе начар йĕркелени çинчен каланă. Колхоз председателĕ Х. Ильясов юлташ, механизаторсене тухăç-лă ĕçлеме майсем туса парас вырăнне, ку ĕçе хăй чăрмантарса пырать иккен. Вăл хирĕçленине пула ыраша кунта çĕнĕ меслетпе патĕ сахал вырнă.

Районти «Герой», «Кзыл юлдуз» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем государ-ствăна тырă пама тытăнман пулнă. Ха-çат Молотов ячĕпе тăракан колхоз руково-дителĕсене государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе вăхăтра пурнăçлама васкаманшăн вырăнлă критиклет.

«Авангард» хаçатăн тепĕр лайăх енĕ вăл—икĕ район хушшинчи ăмăртăва но-мертен номере сутатса пыни. «Икĕ МТС-ăн ăмăртăвĕ» статьяра Елчĕкпе Чкаловски МТС-ĕсем султалăкри ĕçсен планĕсене мĕнле пурнăçласа пынине кăтартса панă. Хаçатăн юлашки номерĕнче ăмăртакан ра-йонсем хальхи тапхăрти ĕçсенче мĕнле ĕл-кĕрсе пыни çинчен çырнă. Тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас енĕпе Елчĕк районĕ халлĕхе Чкаловски райо-нĕнчен малта пырать. «Авангард» хаçат хăйĕн умстатьинче Чкаловски районĕнчи ял ĕçченĕсене ăмăртура юлса пынине пĕ-терме чĕнсе çырать. Унсăр пуçне хаçат-ра Елчĕк районĕнчи малта пыракан кол-хозсен, бригадăсен тата механизаторсен паха опытне сарма пулăшакан статьясем пичетленеççĕ. Вĕсен шутĕнче Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕн В. Зайцев юлташăн статьине асăнма пу-лать.

«Авангард» хаçат тырпул пухса кĕртес ĕçри хăйĕн тивĕçне тĕрĕс ăнланнă. Вăл çак хĕрÿллĕ тапхăрта чăннипех те масса-сен организаторĕ пулма тăрăшни савăнта-рать.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

«САМАХ ПАТАН ПУЛСАН, ĂНА ПУРНĂÇЛА»

Çавăн пек заголовокпа кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕнче пичетленнĕ статьяра Ишлей районĕнчи «Знамя труда» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче выльăх-чĕр-лĕхрен тупăш илес енĕпе йышăннă обяза-тельствăсене пурнăçласа пымани, фермă-сенчи работниксем хушшинчи социализмла ăмăртăва тивĕçлипе организацилемени, парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ ор-ганизаторла ĕçе паянхи задачăсем хушнă пек туса пымани, выльăх-чĕрлĕх пăха-кансем хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе йĕркелемени çинчен каланăччĕ.

КПСС Ишлей райкомĕн МТС енĕпе ĕçлекен секретарĕ Бондарев юлташ «Сă-мах патăн пулсан, ăна пурнăçла» ятлă статьяра палăртнă çитменлĕхсене пĕтерсе пыни, юлашки вăхăтра ĕнесенчен сĕт су-са илесси ÿсни çинчен пĕлтерчĕ.

АВТОМАТИКА—ЫРАНХИ ТЕХНИКА

Пĕтĕм Союзри промышленность выстав-кин залĕсемпе павильонĕсенче социализмла производствăн техники лайăхланса пыни-не, совет ученăйĕсем, инженерĕсем, кон-структорĕсем, рабочи-новаторсем тунă çи-тĕнÿсене тĕплĕн кăтартса панă.

Çитес вăхăтра социализмла производ-ствăра автоматика пысăк вырăн йышăнса тăрасси пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Автома-тика—техникăна малалла илсе пыма, кĕске вăхăтрах ĕç тухăçлăхне пысăккăн ÿстерме, социализмла промышленноçа малалла хăватлăн аталантарма пулăшать. КПСС XX съезчĕ ĕçе механизацилессин хă-вăртлăхне татăклăн вăйлатма, промышлен-ноçра производство процесĕсене анлăн ав-томатизацилеме кирлине палăртрĕ. Вы-ставкăна пынă çынсем уйрăмах производ-ствăна автоматизацилес ĕçре тунă ÿсĕм-сене кăтартса паракан экспонатсемпе ин-тересленеççĕ. Курса сăрмелли сем кунта питĕ нумай.

Акă хура металлурги тунă çитĕнÿсене кăтартса паракан залсем. Домна кăмакин ĕçлекен модельĕ пурри кăмăлне те кайть. Унăн усăллă калăпăшĕ 1.513 кубометр. Ку агрегатăн технологи процесĕсене пĕтĕм-пе ... механизациленĕ тата авто-матизациленĕ. Сык кунта, тĕпрен илсен, механизмсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе кă-... тăрать. Кунтах тата кăмакана автомат-ла майпа ĕçлеттеремелли пульт, тĕрлĕ йыш-ши контрольпе виçе аппаратури, вăл шу-тра кăмакасен шалти стенисене радиоак-тивлă изотопсемпе тĕрĕслемелли аппарат-тур.

Стендсем çинче кăтартнă çĕнĕ, ... домна кăмакисем патĕнче ĕçе кĕртсе ..., анчах та ĕçе кĕртнĕ çĕнĕ ... пирĕн промышленноçăн çак ... чылай вăйлатма май панă. ... тухăçлăхĕ ÿсе пыни çинчен ... те çавна питĕ лайăх кăтартса ... 1940 çулпа танлаш-тарсан, домна кăмакисем патĕнче ĕçлекен-сен ĕç тухăçлăхĕ икĕ хут ытла ÿснĕ.

Хурçă шăратакан производствăра хурçă мĕнле шăранине автоматсемпе тĕрĕслес-се тăрасси, ăтă мĕн чухлĕ пулассине тата ытти процессене автоматсемпе йĕркелесси анлă сарăлнă. Выставкăн çак пайĕнче Çĕ-нĕ Тулăри металлурги заводĕнче тата «Красное Сормово» заводра шăратнă хур-çăна вĕçĕмсĕр юхтарса тăмалли меслетпе усă курнине кăтартакан схемăсем уйрăмах интереслĕ. Хурçă юхтарас ĕçе пĕтĕмпех механизациленĕ тата автоматизациленĕ. Çак меслетпе усă курни металлурги пред-приятийĕсем туна ларакан хака нумай йÿ-нетме май парать, мĕншĕн тесен кивĕ за-водсенчи пек изложницăсем хатĕрлекен цех тата хăшпĕр стенасем кирлĕ пулмаççĕ. Юхтарнă чухне металл юрăхсăра тухни, ялани пек меслетпе юхтарнипе танлаш-тарсан, 10 процент чакать. Производствăн çак участокĕнче ĕçлекен рабочисен ĕç ус-ловийĕ татăклăнах лайăхланать.

Выставкăна пынă çынсем Кузнецкри ме-таллурги комбинатĕнчи блуминга тата Магнитогорскри металлурги комбинатĕнчи прокат станĕсене автоматизациленине кă-тартакан схемăсене нумайччен пăхса тă-раççĕ. Кузнецк комбинатĕнчи блуминга 1954—1955 çулсенче автоматизацилесе çитернĕ. Блуминг механизмĕсене автома-тизациленни унăн тухăçлăхне 29 процент ÿстернĕ. Магнитогорскри металлурги ком-бинатĕнче сортлă прокат тăвакан станĕсене урăхлатса çĕнетнипе тата автоматизаци-ленипе пысăк çитĕнÿ тунă.

Хальхи вăхăтра Совет Союзĕнчи хура металлурги заводĕсенче икĕ блуминга, 10 стана, трубасем тăвакан 1 стана, листасем тăвакан 4 стана автоматизациленĕ. Халĕ тата 23 прокат станĕсене автоматизацилес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Ку вăл прокат производ-ствинче ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерме, планран ирттерсе тĕрлĕ йышши прокат нумай туса кăларма май парать.

Выставкăра промышленноçăн тĕрлĕ от-раслĕсене кăтартнă. Кунта пур çĕрте те тĕрлĕ йышши производствăна автоматика анлăн кĕрсе пынине курма пулать. Акă çĕр кăмрăк шахтисем патне вырнаçтарса лартмалли машинăсен моделĕсене кăтарта-кан макет. Вăл шахта çийĕнчи мĕнпур ĕç-сене пĕтĕмпех механизацилениие кăтартса парать. Выставкăра кăтартнă çак схемăпа улттăмĕш пилĕкçуллăхра çĕнĕрен тăвакан шахтăсенче анлăн усă курма пуçлаççĕ.

Кокспа хими завочĕн çĕр кăмрăкĕ парса тăракан цехĕн ĕçне инçетрен йĕркелесе тăрассине кăтартнă схема уйрăмах кăмăла каять. Пĕтĕм цехăн ĕçне пультри пĕр опе-ратор йĕркелесе тăрать. Цех управлени-йĕнче ĕçлекенсен йышĕ 20 çын чухлĕ ча-кать. Çак системăна ултă заводра—кокс-па хими завочĕсенче ĕçе кĕртнĕ.

Çĕр айĕнчи пуянлăхсене шыранă чухне, нефть кăларнă çĕрте, хими производствин-че автоматла техникăпа анлăн усă кураççĕ. Çакна «Геологи, нефть, хими» павильонĕн-че питĕ лайăх кăтартса панă. Кунта тип-çĕр çинче тата тинĕсре разведка тумалли приборсем пур. Çавăн пекех нефть сква-жинисем тунă чухне антарса хăпартмалли ĕçсене автоматизацилениие кăтартакан илемлĕ панносене, нефть шăтăкĕсене çĕр айĕнче юсассине автоматизацилемелли меслетсене кăтартнă.

Хими промышленноçĕ çĕршыва тĕрлĕ йышши продуктсем питĕ нумай парса тă-рать. Çавăнпа ĕнтĕ хими промышленно-çĕнчи ĕçсене автоматизациленипе пире уй-рăмах интереслентерет. Стенд çинче кă-тартса панă тăрăх, резина промышленноçĕ 36 пин йышши резина япаласем туса кă-ларать.

Совет Союзĕн хими промышленноçĕ юлашки вунă çул хушшинче питĕ пысăк ÿсĕмсем тунă. Вăл металл, йывăç, тир-сă-ран, çăм тата ытти япаласен вырăнне усă курмалли çĕнĕ паха материалсем нумай ту-са кăларнă. Халĕ пире йывăçран пурçăн кĕпе, нефть газĕсенчен—спирт тата кау-чук, тĕрлĕрен органикăлла смаласенчен капрон чăлхасем тата ытти япаласем туса хатĕрлени тĕлĕнтермест. Хими халĕ çав те-ри çÿлĕ пусăмра тăрать, вăл тĕрлĕ йыш-ши продуктсем туса хатĕрлеме пултарать. Çак паха ĕçре производствăна автоматиза-цилени, ĕç мĕнле пулса пынине автоматсем тĕрĕслесе тăни тата ĕçсене кирлĕ пек йĕр-келени пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Малта пыракан техникăна производ-ствăна кĕртсе пырасси чи малтанах йывăр индустрин тĕп никĕсĕ—машиностроени аталанăвĕ, уйрăмах унăн тĕп отраслĕ—станоксем тăвасси мĕнле пулнинчен ки-лет. «Станкостроени» ятлă пысăк па-вильонра Совет Союзĕнчи станоксем тăва-кансен çитĕнĕвĕсене тĕплĕн кăтартса па-нă. Кунта ултă пысăк залра металран тата йывăçран тĕрлĕрен япаласем тăвакан тĕр-лĕ йышши станоксем вырнаçтарса ларт-нă. Вĕсене хамăр çĕршыври заводсенче ту-са кăлараççĕ. Çиччĕмĕш залра касакан та-та виçекен инструментсен экспонатĕсене, виçмелли приборсене кăтартнă.

Курма пынă çынсем павильонра хăвăрт ĕçлекен универсальнăй-токарнăй станок-сене, тĕрлĕ йышши детальсем туса хатĕр-лемелли пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен авто-матла тата çурма-автоматла станоксене кураççĕ.

Малта пыракан техникăпа усă курни халăх хуçалăхне чăннипех пысăк усă па-рать. Çакна промышленноçĕн ытти отрас-лĕсенче тунă ÿсĕмсене кăтартакан па-вильонсенчи стендсем çинче те питĕ ла-йăх курма пулать. Тракторпа ялхуçа-лăх машиностроенийĕн экспоначĕсем залĕсенче производствăна автоматизацилениие кăтартакан макетсемпе панносем ну-май. Фрунзе ячĕпе тăракан заводра тата Первомайскинчи ялхуçалăх машиностроени заводĕнче кĕрепле шăлĕсене туса кăлара-кан автоматла линисем вырнаçтарса лартнă. Çак линисем сменăра 2.500—3.000 кĕрепле шăлĕ туса кăлараççĕ. Автоматла линипе усă курни кашни кĕрепле шăлĕн хăйне ларакан хакне 25 процент йÿнетме, пахалăхне чылай лайăхлатма май парать. Халĕ тракторпа ялхуçалăх машиностроени министерствин предприятийĕсенче 33 ав-томатла лини ĕçлеççĕ, улттăмĕш пилĕкçул-лăх вĕçĕнче вĕсен шучĕ 200 çитет.

Автоматизаци энергетикăра, çăмăл тата йывăçран тĕрлĕ япала тăвакан промышлен-ноçра, çавăн пекех промышленноçăн ытти отраслĕсенче те пысăк усă панине кăтарт-нă. Курма пыракансем гидроэлектростан-цисене автоматизацилемелли тата теле-механизацилемелли принципсемпе палла-шаççĕ. Пăспа ĕçлекен электростанцисен кă-макисенче топливо çунтарассине автоматла майпа йĕркелениие кăтартакан макет питĕ кăмăла каять.

Улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе партин XX съезчĕ йышăннă Директивăсен-че уйрăм агрегатсене тата ĕçсене автомати-зацилени çителĕксĕр, цехсене тата техноло-ги процесĕсене автоматизацилеме тытăн-малла, производствăна пĕтĕмпех автомати-зациленĕ предприятисем тума тытăнас пу-лать, тенĕ. Ку енĕпе пирĕн ученăйсем, кон-структорсем тата производство новаторĕсем чылай ĕçсем тунă. «Сăкăр» ятлă павильон-ра тĕрлĕ йышши автоматла поток лини-йĕсемпе пĕрлех Мускаври Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан çăкăр завочĕн ĕçне кăтар-такан тĕп схема пур. Ку вăл çăкăр пĕçе-рекен чи лайăх завочĕсенчен пĕри. Вăл талăкне 250 тонна паха çăкăр пĕçерсе кă-ларать. Выставкăра çавăн пекех су-перфосфат туса кăларнине кăтартакан схема, автоматла майпа клеенка туса кă-ларакан заводăн схеми пур.

«Машиностроени» ятлă павильонăн те-мисе пысăк залĕнче пирĕн çĕршывра приборсемпе автоматизаци хатĕрĕсене туса кăларас ĕçре тунă ÿсĕмсене кăтартнă. Кунта тĕрлĕ йышши приборсемпе хатĕрсем нумай. Вĕсем пулăшнипе контроль ĕçне, технологи процесĕсене йĕркелессине авто-матизацилеме пулать. Вĕсен шутĕнче—электронлă приборсем, çавăн пекех радио-активлă пайăрсемпе, ультракороткий тата ультразвуковой хумсемпе усă курма тунă приборсем тата ыттисем те нумай.

Уйрăмах математика машинисем кăмăла каяççĕ. Вĕсене Совет Союзĕнче туса хă-тĕрленĕ. Халĕхе вĕсемпе лабораторисенче, наукăпа тĕпчев институчĕсенче тата кон-структор организацийĕсенче кăна усă кур-ма палăртнă. Çак машинăсем питĕ усăллă. Сăмахран, самолет мĕнле вĕçессине 10 ва-риантра шутлас пулсан, шутласа кăлара-кан бюрон (бюрора 10 математик пулсан) çичĕ уйăх ĕçлемелле. Электронлă матема-тика машини пулăшнипе çав ĕçе, 100 ва-риантпа шутлас пулсан, тăватă сын эрне хушшинче туса пĕтереççĕ.

Шутласа кăларакан электронлă техника валли анлă малашлăхсем уçăлаççĕ. Шăпах та çак техника автоматизацине пурнăçа кĕртес ĕçре пысăк вырăн йышăнмалла. Мĕншĕн тесен автоматла майпа шутласа кăларакан машинăсем хăйсемех производ-ство процесĕсен чи усăллă режимĕсене пĕлме тата вĕсене тытса пыма, продукци пахалăхĕ енĕпе чи юрăхлă заданисене ту-ма тата контроллеме пултараççĕ. Шăпах та çак техника ĕнтĕ производствăна автомат-ла ĕçлеттермелле тума май парать.

...Выставкăри çирĕм павильонăн нумай залĕсенче пирĕн промышленность тунă ÿсĕмсене кăтартакан экспонатсем тулли-ех. Кирек хăш павильона кĕр, пуринче те производствăна автоматизацилениие, про-изводствăн пур отраслĕсенче те автомат-семпе анлăн усă курнине курма пулать. Производствăна автоматизацилесси улт-тăмĕш пилĕкçуллăхăн—халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене çĕнĕ техникăна анлăн кĕртсе пыма палăртнă пилĕкçуллăхăн—тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать те ĕнтĕ.

В. РЕУТОВ.

Мускав хули.

Кукуруза уйĕсенчи паянхи ĕçсем

Кăçал кукуруза çитĕнтерме питех те лайăх çул пулчĕ. Нумай колхозсенче вăл вăйлă ÿсет, хăшпĕр вырăнсенче вара питех те лайăх. Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Красноармейски тата Ишлей районĕсенчи хăшпĕр колхозсен кукуруза уйĕсене пăхса тухнă хыççăн, çакна палăртмалла: кукуруза çине тивĕçлипе пăхман, ăна хакламан колхозсенче вăл кăçал та вăйлă мар, хăшпĕр лаптăксем çинче ытла та начар: калчасем сайра, имшер, çумкурăк айне пулнă. Паллах, çавăн пек лаптăксем çинче кукуруза пуçĕсем мар, симĕс тунипе çулçине те сахал туса илессĕ.

Тĕслĕхрен, Ишлей районĕнчи «За коммунизм» колхоза илсе пăхар. Чăваш ялхуçалăх институтĕн студенчĕсем акнă лаптăк çинче кукуруза вăйлă ÿсет. Кунта ăна вăхăтра акнă, вăрлăха кирлĕ тарăнăшне хурса хăварнă. Сĕртме уйне кукурузăна колхозниксем июнь уйăхĕнче, шăрăхсем пуçлансан тин акнă пулнă. Çавăнпа унта вăрлăхăн пысăк пайĕ шăтса та тухман. Тĕрĕслесе пăхни çакна кăтартрĕ: ăшăх пăрахса хăварнă вăрлăхсем шăтма пуçланă, анчах калчасем тăпран çиелти сийĕ хытса кайнă пирки шăтса тухайман. Колхозри агроном кукуруза акнă вăхăтра тăпра типсе кайнине шута илнĕ, çапла вара вăрлăхсене тарăнрах, 6—8 сантиметр тарăнăшне хурса хăварма хушнă пулсан, паллах, ĕç йăлтах урăхла пулнă пулĕччĕ.

Хăйпĕр колхозсенче калчасем питĕ сайралса кайни вĕсене сиен кÿресрен сыхламаннипе килнĕ. Куракçем калчасене нумай тăпăлтарса пĕтернĕ. Çавăн пекех проволочникпа тата ытти сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешессине те йĕркелемен.

Чи пысăк çитменлĕх—кукурузăна кирлĕ пек пăхса çитĕнтерменни пулса тăрать. Çумкурăк айне пулнă лаптăксем çинче кукуруза кĕске, ансăр çулçăллă, çинçе туналлă.

Лайăх пăхса çитĕнтернĕ лаптăксем çинчи кукуруза пачах урăхла. Кунта кукуруза 170—180 сантиметр ÿснĕ, унăн çулçисем сарлака, тунисем хулăн. Çакăн пек лаптăксем çинчи кукурузăн симĕс тунисемпе çулçисем халĕ гектартан 350—400 центнертан кая мар тухассĕ. Вăл малалла тата нумай ÿсет-ха, мĕншĕн тесен кукурузăн ÿсĕм тапхăрĕ тепĕр уйăх ытла. Сăнави çакна кăтартать: кукуруза талăк хушшинче 3—5 сантиметр ытла ÿсет. Халĕ каçсем сивĕ тăман пулсан, вăл тата нумай ÿсмелле.

Тĕшĕлĕх кукурузăна пухса кĕртес вăхăт çитиччен мĕнле ĕçсем туса ирттермелле-ха? Лайăх ÿсекен лаптăксем çинче кукурузăн хунав турачĕсене иртсе тасатмалла, чечексене тепĕр хут шăркалантармалла, хурт-кăпшанкăсем сиенлесрен тата чир-чĕр ересрен сыхланмалла. Пĕр тĕслĕх илĕпĕр: Красноармейски районĕнчи «Герой» колхозăн (председателĕ Харитонов юлташ) кукуруза 17 гектар. Калчасем лайăх çитĕннĕ. Уйра çумкурăк çук. Тунасене тăпрапа купаласа хунă, çакă кукурузăна çĕрти тутăхлă япаласене ытларах илме, вăйлăрах аталанма пулăшнă. Кукуруза çÿлĕшĕ уйрăм вырăнсенче 2 метртан та иртет. Ÿсентăрансенчен ытларахăшĕ чечексем кăларнă, çакă вăл кунта ăнăç пек хытă кукуруза пуçĕсем пуласса шантарать. Кукуруза вăйлă, пухса кĕртессе çеç кĕтмелле теме пулать. Çук, апла мар. Тухăçлă кукурузăшăн халĕ те çине тăрса кĕрешмелле.

«Герой» колхозри кукуруза уйĕнче тумалли ĕçсем чылай-ха. Кунта пуринчен малтан хунав тунисене иртмелле. Вĕсем, пĕр енчен, симĕс тунасемпе çулçăсем ытларах пухса кĕртме пулăшассĕ. Кукурузăна тĕшĕлĕх ÿстерекен лаптăксем çинче хунав тунасем кирлĕ мар. Хунавсене çĕнчĕ çĕçĕпе е сурлапа касса татмалла, алăпа татма юрамасть. Иртсе пухнă хунав тунасене выльăхсене çитермелле. Çакă вăл выльăхсене симĕс апат ытларах çитерме май парать. «Герой» колхозра кукурузăн хунав тунисене иртсе ĕçе доярккăсем хăйсемех тăвассĕ.

«Герой» колхозра кукуруза чечеке ларнă. Кунта искусственнăй майпа шăркалантарни халĕ питĕ кирлĕ. Çакă вăл кукуруза пуçĕсене хăвăртрах пиçсе çитме, тулăрах пулма пулăшать. Вăрлăхлăх ÿстерекен лаптăксем çинчи кукурузăна искусственнăй майпа ытларах шăркалантармалла.

Искусственнăй майпа шăркалантарас ĕçе тĕрлĕ меслетпе тума пулать. Вĕсенчен чи ансатти—ÿсентăрансем çийĕпе вĕрен сĕтĕрсе шăркалантарни. Çак меслетпе шăркалантарнă чухне аçа чечексем çинчи тусан ама чечексем çине силленсе тăкăнать. Кукуруза çÿлĕ вырăнсенче шăркалантарнă чухне 5—6 метр тăршшĕ вĕрен вĕçĕсене патаксем çумне çыхмалла. Икĕ çын çак вĕрене сĕтĕрсе, ретсем хушшипе çÿрессĕ.

Иккĕмĕш меслет те питĕ ансат. Искусственнăй майпа шăркалантаракан колхозниксем ретсем хушшипе ÿсентăрансене кăштах силлесе çÿрессĕ. Çапла майпа аçа чечек тусанĕ ама чечекĕн пурçăн пек çÿçĕ çине тăкăнать. Ама чечексен пурçăн çÿçисене татмалла мар, вĕсемсĕр чечек шăркаланмасть, кукуруза тĕшшисем пулмассĕ.

Çавăн пекех шăркалантармалли ятарласа тунă хатĕр пур. Вăл варринче сĕвĕрлĕ, ăна картонран, хулăм хутран е фанерăран тăвассĕ. Варинккен аялти ансăр шăтăкне марльăпа е таса ирулук сеткăпа питĕрмелле. Икĕ-виçĕ ÿсентăран çулĕ аçа чечексен тусанне çак варинккесем çине пухассĕ. Пуханнă тусана хутăштармалла та ретсем тăрăх ама чечексем çине силлесе тухмалла. Çак меслетпе ир, сывлăм типиччен тата каçхи сулхăнра шăркалантарни усăллăрах. Сулхăн çанталăкра вара кирек хăш вăхăтра та шăркалантарма юрать.

Кукуруза 10—12 кун чечекре ларать. Çак вăхăтра искусственнăй майпа шăркалантарассине кашни виç-тăватă кун иртсен, виçĕ хут туса ирттермелле. Çак ĕçе кая юлса тумалла мар, мĕншĕн тесен хура тăпраллă мар тăрăхра кукурузăн малтанхи чечекĕсем пахарах тĕшĕ парассĕ. Искусственнăй майпа шăркалантарсан тĕшĕсем часрах çăмăртанассĕ, хăвăртрах пиçсе çитессĕ.

Нумай колхозсенче кукуруза калчисене шведски шăна пысăк сиен кÿрет. Çак шăнана пĕтерме кашни гектар пуçне 20—25 килограмм гексахлоран сапмалла.

Хăмпăллă вутпуççипе сиенленĕ ÿсентăрансене пĕтерессипе—питех те васкаллă тумалли ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Çак чирпе сиенленĕ ÿсентăрансен çулçисем, тунисем тата чечекĕсем çинче мăкăрăлса тăракан хăмпăсем пулассĕ. Хăмпăсем ăшĕнче хăмăр тусан пулать. Çак тусан хăмпăсем сурăлсан вĕçсе саланать, ытти ÿсентăрансене сиенлет. Çĕр çине тăкăннă тусан хĕл каçать, çитес çул акнă ÿсентăрансене те сиен кÿрет. Çавăнпа хăмпăллă вутпуççине хирĕç кĕрешмелле. Çак чирпе сиенленĕ ÿсентăрансене уйран тасатмалла, тăпра ăшне 40—50 сантиметр тарăнăшне чавса хумалла.

Çÿлте кăтартнă ĕçсене тума йывăрах мар. Анчах вĕсене туса ирттерни питех те кирлĕ, вăл кукуруза тухăçлăхне тата пахалăхне нумай ÿстерет.

Кăçал кукуруза чылай çĕрте лайăх çитĕнет. Çакă вăл кукуруза ÿссине ăнланса илеймен, ăна акакан лаптăка пысăклатма иккĕленекен колхоз председателĕсене, кукурузăна хакламан сиенлĕ шухăшсене пăрахтарĕ. Агротехникăна тĕрĕс пурнăçлакан, çанталăк условийĕсене шута илекен колхозсенче кăçал кукурузăран хатĕрленĕ паха апат çителĕклĕ пулать.

Профессор Л. ПЕЛЬЦИХ.

Монтажниксен бригадинче



Кăнтăрлахи апат вăхăчĕ иртессе тата çур сехете яхăн. Апатланнă хыççăн ĕçе маларах пынă монтажниксем трактор пайĕсем тăвакан заводăн тĕп корпусĕ патне пухăнса ларнă. Кĕçех вĕсем патне Василий Николаевич Александров агитатор пырса çитрĕ. Вăл хăй те кунта ĕçлет. Унăн аллинче çĕнĕ хаçатсем.

Агитатор «Правда» хаçатра çурçене йÿнĕ, хăвăрт тата çирĕп тăвас тĕлĕшпе вулаканĕсен çырăвĕсене чылай пичетлени çинчен каласа пачĕ, тĕнчери лару-тăрупа паллаштарчĕ. Монтажниксем унăн калаçăвне тимлĕ итлерĕç.

Сасартăк кран кăшкăртрĕ, вăл ĕç пуçланни çинчен пĕлтерчĕ. Монтажниксем хăйсен вырăнĕсене тăчĕç. Каллех хĕрӳ ĕç шавĕ янăраса кайрĕ. Нина Багымова крановщица тĕп корпусăн виççĕмĕш хутне кранпа тимĕрбетон изделийĕсем çĕклеме тытăнчĕ. Вăл кранпа ĕçлеме касçерен ултă уйăхлăх курсра вĕреннĕ, хăйĕн ĕçне юратса тăвать, крана яланах йĕркеллĕ ĕçлеттерет, сменăри нормăна тăтăшах ирттерсе тултарать.

Кранпа çĕкленĕ изделисене мачча çине ретĕн-ретĕн сарса тухассĕ. Ку ĕçе Василий Антонов, Иван Маляков, Николай Дмитриев, Леонид Королев монтажниксем тăвассĕ. Георгий Муннова Петр Николаев карнизе тимĕрпе çирĕплетессĕ. Вĕсем чылай çул хушшиç ĕçлесе пуян опыт пухнă, сменăри нормăна яланах 180-шар процент таран, тепĕр чухне ытларах та тултарассĕ. Тĕслĕхрен, Петр Николаева илер. Вăл кунта тăваттăмĕш çул ĕçлет. Малтанах тĕрлĕ ĕçсем тăвакан бригадăра пулнă, ÿркенмест, йывăрлăхран хăраса çамăть, кирек мĕнле ĕçе те тĕплĕ тума тăрăшать. Икĕ çултан ăна монтажника куçарнă. Шанса панă ĕçе часах хăнăхнă, производствăра ÿсĕм хыççăн ÿсĕм тума пуçланă. Халĕ икĕ çыншăн ĕçлет вăл!

Монтажниксен бригадинче пурĕ çирĕм çын. Вĕсем пĕр-мĕнпипе туслă пурăнассĕ, тачă çыхăнса ĕçлессĕ. Хастарлă коллектив июль уйăхĕнчи программине 176 процент пурнăçларĕ, август планне вăл 180 процентран кая мар тултарассишĕн кĕрешет.

— Эпир ĕçри çитменлĕхсене пĕтарса хăварма пултараймастпăр,—тет И. Кульчихин бригадир.—889-мĕш УНР руководителĕсен çавранăçусăрлăхĕпе пула час-часах тимĕрбетон изделийĕсем çукпипе ахаль ларма тивет. Производство предприятийĕсен комбиначĕ парса тăракан плитасен пахалăхĕ начар пулать, вĕсем ванса юрăхсăра тухассĕ. Çакнашкал çитменлĕхсене пĕтерсен эпир тата тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшатпăр.

Укерчĕк çинче: 123-мĕш стройтрестри 889-мĕш УНР-ти монтажниксен пĕр ушкăнĕ кранпа çĕкленĕ тимĕрбетон изделийĕсене трактор пайĕсем тăвакан заводăн тĕп корпус патне сарать.

Г. Зиньков фотоÿкерчĕкĕ.

Ĕçе çăмăллатассĕ

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи чесальнăй цех плана уйăхран уйăха ирттерсе тултарать. Июль уйăхĕнчи плана вăл 110 процент тултарчĕ, продукци пахалăхне лайăхлатрĕ. Çак уйăхра та вăл аван ĕçлет. Цех начальникĕ Н. Хлопина юлташ рабочисемпе тачă çыхăну тытать, вĕсемпе тăтăшах калаçать, тухăçлăрах ĕçлеме пулăшать.

Иртнĕ уйăхра цехри тазохолстовщицăсем çĕнĕ меслетпе ĕçлеме пуçларĕç. Унччен кашни работница 18-шар чесальнăй машинăпа ĕçленĕ, вĕсене тасатнă, продукци мĕнле тухнине сăнанă. Халĕ вĕсем 26 машинăпа ĕçлессĕ. Машинăсене тасатма уйрăм работницăсене—пуховщицăсене хушнă. Çакăн хыççăн тазохолстовщицăсен ĕçĕ çăмăлланчĕ.

Цехра йывăр ĕçсене механизацилес, производство технологине лайăхлатас, ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттерессĕ. Д. Григорьев проверяльщик ултă рационализаторла сĕнÿ пачĕ. Вĕсенчен тăваттăшне производствăна кĕртнĕ.

Ку таранччен холстиксене иккĕмĕш хута подъемникпа хăпартнă. Подъемник патне вара кашни сменăрах 4-шар çын урапасемпе турттарса тăнă. Халĕ ятарласа тунă хăйех çаврăнса тăракан механизмпа усă курассĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Двигательпе усă курмассĕ

ЕТĔРНЕ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ 1953 çулта вунă пин тенкĕ парса 22 лаша вăйлĕ двигатель туянчĕ. Унтанпа виçĕ çул çитрĕ, анчах двигатель складрах ларать.

Двигатель ĕçе ярсан, хуçалăхра нумай ĕçсене механизацилеме пулать. Колхоз правленийĕ çакăнпа интересленмест.

А. ЯКОВЛЕВ.

КОНСУЛЬТАЦИ

Государство пенсийĕсене камсем илме пултарассĕ

Государство пенсийĕсем çинчен йышăннă Закон кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ĕçе кĕрет. Пенси илмелли правасемпе тулли усă курас тесен, ăна илмелли условисемпе тĕплĕн паллашмалла. Нумай граждансем хăйсен çырăвĕсенче пенси илмелли условисене ăнлантарса пама ыйтассĕ. Кунта эпир пенси памалли хăшпĕр пĕтĕмĕшле положенисем çинчен чарăнса тăрастăп.

Государство пенсийĕсене камсем илме пултарассĕ?

Законра кăтартнă тăрăх государство пенсийĕсене çак граждансем илме пултарассĕ:

а) рабочисемпе служащисем тата государство енĕпе социальнăй страховани çине кĕрекен ытти граждансем;

б) срокла çар службинче тăракан рядовойсем, сержантсем тата старшинасем;

в) аслă, специальнăй вăтам шкулсенче, училищĕсенче, кадрсем хатĕрлекен шкулсенче тата курссенче вĕренекенсем; аспирантсем, докторантсем тата клиникăри ординаторсем;

г) государство е общество ĕçĕсене пурнăçланă чухне е çын пурнăçне çăлса хăварас, социализмла харпăрлăха, çавăн пекех тата социализмла йĕркелĕхе сыхлас ĕçре инвалида тухнă граждансем;

д) çÿлте асăннă граждансен çемйисен членĕсем тата çав граждансен шутĕнчи пенсионерсен çемйисен членĕсем, вĕсем хăйсене пăхса усракансăр тăрса юлнă пулсан.

Çапла вара рабочи е служащи пулса ĕçлемен граждансене, вĕсем государство енĕпе социальнăй страховани çине кĕрессĕ пулсан, тата вĕсен çемйисене, пенси рабочисемпе служащисене паракан условисемпех памалла (сăмахран, донорсене).

Çÿлте асăннă вĕренекенсене, аспирантсене, докторантсене, клиникăри ординаторсене, вĕсем вĕренме кĕриччен рабочи е служащи пулса ĕçленĕ пулсан, тата вĕсен çемйисене, пенси рабочисемпе служащисене паракан условисем тăрăхах парассĕ.

Партизан пулнă граждансене тата вĕсен çемйисене пенси Законра кăтартнă срокла çар службинче тăракан рядовойсене, сержантсене, старшинасене тата вĕсен çемйисене памалли условисем тăрăх парассĕ.

Вăрçă чухне фронт пулнă вырăнсенче ĕçлесе (чугун çулсем çинче, тĕрлĕрен оборона сооруженийĕсем тунă çĕрте т. ыт. те) аманса е чирлесе инвалида тухнă граждансене те пенси çав условисем тăрăхах памалла.

Çар, тинĕс тата сывлăш флочĕсен, СССР шалти ĕçсен министерствин, Государство хăрушсăрлăх комитечĕн органĕсенче ĕçлекен офицерсем, генералсем, адмиралсем, наука работникĕсем, республика умĕнче уйрăмах паха ĕçсем туса хисепе кĕнĕ граждансем тата вĕсен çемйисем пенси правительство ятарласа кăларнă уйрăм положенисем тăрăх илме пултарассĕ.

Государство пенсийĕсене ватăлнă пирки, инвалида тухнă пирки тата пăхса усракансăр тăрса юлнă пирки парассĕ.

Граждансем, вĕсен государство пенсийĕсем илме право пулсан, çав пенсие илме ыйтса кирек хăçан та заявленисем пама пултарассĕ. Ку тĕлĕшпе вĕсене нимĕнле срок та пÿлсе тăма пултараймасть. Кивĕ пенси законĕ ку енчен урăхларах пулнă. Сăмахран, çав закон тăрăх граждансем инвалида тухнă пирки хăйсене пенси памалла тума ĕçлеме пăрахнă кунтан шутласа икĕ çул хушшинче кăна ыйтма пултарнă.

Çĕнĕ Закон тăрăх ватăлнă пирки е инвалида тухнă пирки рабочисемпе служащисене, вĕсен пенси илме право пулсан, ĕçлесен, ĕçлемесен те пурпĕрех пенси парассĕ.

Закон тăрăх пенсие, илан тенĕ пекех, ăна пама ыйтса заявлени тăратнă вăхăтран пуçласа парассĕ. Çав вăхăт кирлĕ документсемпе пĕрле район (хула) Совет исполкомĕн социальнăй обеспечени пайне заявлени панă кун шутланать.

Законра: «Граждансен пĕр вăхăтрах тĕрлĕ пенсисем илме право пур пулсан, вĕсене, хăйсем суйласа илнĕ тăрăх, пĕр пенси памалла тăвассĕ», тенĕ. Сăмахран, инвалид пирки пенси илсе тăнă пенсионерăн çав вăхăтрах ватăлнă пирки пенси илме право пулсан, вăл çак икĕ тĕрлĕ пенсирен пĕрне хăй суйласа илме пултарать.

Уйрăм категорири специалистсем (учительсем, медицина работникĕсем тата ыт. те) нумай вăхăт ĕçленĕшĕн паракан пенсие малалла та ку таранччен илсе тăнă йĕркепех илме пултарассĕ. Анчах вĕсен ватăлнă пирки е инвалида тухнă пирки пенси илме çĕнĕ Законпа право пулсан, вĕсем хăйсене хăш пенси ытларах кăмăла кайть, çавна илме пултарассĕ.

Пĕр тĕрлĕ пенсирен тепĕр тĕрлĕ пенсие куçас тесен, граждансен ун çинчен социальнăй обеспечени пайне заявлени памалла. Çавăн пек заявленисĕр урăх пенси çине куçармассĕ. Заявленире ыйтакан пенсие (ăна илме право пулсан) заявлени панă кунтан шутласа пама пуçлассĕ.

Граждансен пенси ыйтăвĕпе панă заявленийĕсене район (хула) Совечĕн исполнительнăй комитечĕ туса хунă пенси памалла тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси 10 кунтан кая юлмасăр пăхса тухать, ĕçе пĕлсе татса пани çинчен 5 кунтан кая юлмасăр çырупа ответ парать. Çав комисси решенийĕсемпе килĕшмесен район (хула) Совечĕн исполнительнăй комитетне жалоба пама пулать. Суд органĕсем кун пек жалобăсене йышăнма пултараймассĕ.

Халĕ пенси илсе тăракан граждансем кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕччен кивĕ йĕркепех пенси илсе тăрассĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, вĕсене пенси çĕнĕ Закон тăрăх пама тытăнассĕ. Халиччен пенси илмен, анчах çĕнĕ Закон тăрăх пенси илме тивĕçлĕ граждансен ыйтăвĕсене район (хула) Совечĕн исполкомĕсен социальнăй обеспечени пайĕсем кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тин пăхса тухма тытăнассĕ. Çавăнпа та çав граждансенчен заявленисем октябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнмассĕ.

П. ВАСИЛЬЕВ.

Колхоз пурлăхне упрамалла

Тăвай районĕнчи «Сталь» колхозра иртнĕ çулта татнă кантăр 7—8 пин çурăм купаланса тăрать, çĕрсе кайнă çурăмсене шăшисем вакласа пĕтернĕ. Кантăр çурăмĕсен пĕр пайĕпе арман пĕвия пĕвеленĕ çĕрте усă курнă. Çав вăхăтрах колхоз государствăна çÿс-кантăр парса татман.

Пĕлтĕрхи ырăш кĕлтисем те 8 капанра ялăхса выртассĕ. Колхоз правленийĕ общество пурлăха хуçасăрла тытăлăнине ревизи комиссийĕ те интересленмест. Парторганизаци те çак фактсемпе килĕшсе пурăнать.

В. ЧАЙКИН.

Шупашкар хĕрĕ

КАЛАВ

Надьăпа эпĕ почтăра паллашрăм. Братск гидростанцине тунă çĕрте командировкăра пурăнаканскер, эпĕ кашни кун тенĕ пекех унта хам валли çырусем килнине пĕлме çÿреттĕм. Почтăра эпĕ куллепех пĕр хĕре куратăм, вăл та, ман пекех çырусем кĕтетчĕ пулас. Капрахпа, эпир иксĕмĕр те Шупашкар çыннисем пулнине пĕлнĕ хыççăн, эпир сывăх юлташсем пек, час-часах тĕл пулкалама пуçларăмăр.

Ĕçрен килнĕ хыççăн çамрăксем Ангара хĕрринчи ешĕл уçланкăна пуçтаранатчĕç, юрлатчĕç, ташлатчĕç, унта вара эпир те—Надьăпа иксĕмĕр те пайкалаттăмăр.

Калаçмалли сем пирĕн яланах нумай тупăнатчĕç. Шупашкарти артистсене, вĕсем мĕнле вылянине аса илеттĕмĕр, хăшне-пĕрне ырлаттăмăр, теприсене хурласси те пулкалатчĕ.

Эпĕ Надя ĕçленĕ çĕре те кайса куртăм, унăн юлташĕсемпе те паллашрăм. Вĕсен бригадинче сакăр хĕрачаччĕ, пурте çамрăкскерсем, тĕрлĕ вырăнсенчен килнĕскерсем, вĕсем пурте бетон хунă çĕрте ĕçлетчĕç.

Эпир Падун тăвĕсем çине те хăпаркалаттăмăр, хамăр умрах, аялта, шарлаксем тăрăх кăпăкланса шавласа юхакан хаяр кăмăллă Ангара çине пăхса тĕлĕнеттĕмĕр.

Унтанах пире Ангара шывĕн икĕ çыранĕ çинче те ÿссе ларнă илемлĕ çĕнĕ поселоксем, вĕсен таврашĕнче ĕçлекен экскаваторсем, тракторсем, автомашинăсем куранатчĕç, гидростанци пĕвви пулмалли вырăнта гранит çыранĕсене сирпĕтни те тупăсем пенĕ евĕрлĕ илтĕнсе тăратчĕ.

Эпĕ ăна Атăл çинчи суркунне çинчен каласа параттăм, вăл вара Çĕпĕрти суркуннене ырлатчĕ, ĕмĕрпех кунта пурăнма та хатĕрри çинчен каласатчĕ.

Надя мана çав тери ырă та ăшă кăмăллă çын пек туйăнатчĕ, ман ăна мĕнле те пулин пулăшас килетчĕ, анчах эпĕ нимпе пулăшма та пĕлместĕм, ăсатмалла анĕ чухне ăна хулран тытма та именеттĕм.

Пĕррехинче, хĕвел Падун тăвĕсем хыçне анса ларсан, эпир Надьăпа яланхи пекех урамсем тăрăх уçăлса çÿреме тухрăмăр.

Çав каç Надя халиччен хи пек мар хаваслă пулчĕ, пĕчĕк ача пекех шăкăлтатса калаçрĕ, паллашнăранпа пĕррремĕш хут мана хулран тытрĕ. Эпĕ унăн хавасланăвĕн сăлтавĕ çинчен ыйтсан, вăл мана çапла каларĕ:

— Эсĕ пĕр кĕнеке çинче мĕн çырнине астăватăн-и? «Ман чĕрери тĕттĕм кĕтессе темĕнле ăшă сутă кĕме пуçларĕ»,—тенĕччĕ унта.

Ун сăмаххисене эп ăнланаймарăм, вăл та мана ăнлантарса памарĕ.

Поселок вĕçнелле, тайга еннелле утрăмăр. Икĕ хутлă çĕнĕ йывăç çурт тĕлне çитсен вăл кăштах чарăнса тăчĕ.

— Çак çурт вырăнĕнче çур çул каярах брезентран карса тунă палатка ларатчĕ,—терĕ Надя сасартăках кичемленнĕ сасăпа.—Кунти çынсем ăна «Шупашкар палатки», тесĕ ят панăччĕ... Унта Шупашкартан килнĕ тăватă чăваш хĕрĕ пурăнатчĕ...

Вăл, шухăша кайнă пек, пÿрт умĕнче касмасăр юлнă ватă чăрăш çине пăхса тăчĕ. Унтан вара пуçне усрĕ те хуллен çапла каларĕ:

— Çав хĕрсенчен пĕри Галя ятлăччĕ...

Эпĕ вăл каласа панине хальхи пекех лайăх астăватăп.

...Братск гидростанцине тума кайкан тăватă чăваш хĕрĕ Шупашкар станцинче паллашнă. Вĕсене ăсатса яма ашшĕ-амăшĕсем, тăванĕсем, юлташĕсем пынă.

Çав ăсату та яланхи пекех пулнă ĕнтĕ. Ваттисем хурланнă, куççульсене те шăлкаласа илнĕ. Çамрăксем вара шÿт тунă, кулнă, качча кайсан е авлансан пĕр-пĕрин патне телеграммăсем ярса туя чĕнме ыйтнă, юрланă. Пĕри те макăрман. Пĕр Галя кăна урăхларах пулнă: юрламан та, шÿтлемен те, вăл хăйĕн ватă амăшĕпе кăна шăппăн калаçса тăнă.

— Тен, каймăн, хĕрĕм?—тенĕ ăна амăшĕ.—Çемьере темле те пулать. Ан кай, вара йăлтах майлашĕ...

— Каятăп, анне, унта пире кĕтессĕ,—ответленĕ Галя.

Вара шартлама хĕл кунĕнче Шупашкар хĕрĕсем Падун тайгине çитнĕ. Ангара хĕрринчи ĕмĕрхи тайгара ун чухне çынсем те, палаткăсем те сахал пулнă-ха, вăл вăхăтра гидростанци строительстви тин кăна пуçланнă.

Тăватă чăваш хĕрне пĕр пушă палаткăна вырнаçтарнă. Тулта хĕрĕх пилĕк градуслă Çĕпĕр сивви тăнă пулсан та, палаткăра ăшă пулнă,—унта тимĕр кăмака çунса тăнă.

Хĕрсем—хĕрсемех çав. Палаткăна вырнаçнă-вырнаçманах çул çинчи тумтирĕсене улăштарнă, юр ирĕлтерсе ăшă шыв туса çăвăннă, вара харпăр хăй кĕтесне илемлетме тытăннă. Галя хăйĕн койки тĕлне кăтампир çине тĕрлесе тунă пысăк кавир çакса хунă, вăл кавир çинче пуканепе выляса ларакан пĕчĕк ача ÿкерчĕкĕ пулнă.

Вара вăл чемоданĕнчен сĕтел çине лартмалли кантăклан фотоÿкерчĕк кăларнă, анчах ăна вăл тумбочка çине лартас тенĕ чух ăнсăртран ÿкернĕ те, çĕмĕрсе пăрахнă.

— Пĕтĕмпех пĕтрĕ,—тенĕ вара вăл, урайнелле пăхса. Фотоÿкерчĕк кантăкĕн ванчăкĕсем çине шухăша кусçуль тумламĕсем ÿкнĕ.

Çав фотоÿкерчĕк—Гальăн упăшки пулнă...

...Вунпĕрмĕш класс пĕтерсен Галя Шупашкарти пĕр заводра ĕçлекен çамрăк инженерпа паллашнă. Вăл инженер çинчен никам та усал сăмах каламан. Ĕçре вăл яланах малта пынă, халăх хушшинче йĕркеллĕ пулнă. Галя институтра кайма шутласан, вăл ăна пĕр-икĕ çул тăхтама, хăй ĕçлекен заводах ĕçе кĕме сĕннĕ. Хĕрача ăна юратнă, çавăнпа унăн кашни сăмаххипех килĕшнĕ. Вĕренме каймасан, заводра ĕçе кĕнĕ, часах ăна качча та тухнă.

Çамрăк мăшăр пурнăçĕ телейлĕ пек туйăннă, анчах вăл телей вăхăтлăха кăна пулнă-мĕн...

Пĕррехинче заводра комсомолецсен пухăвĕ пулнă, унта партипе правительство çамрăксене Çĕпĕрти аслă стройкăсене кайма чĕннине сÿтсе явнă. Галя упăшки, активист тата ĕçре яланах малта шутланакан инженер, Тăван çĕршыв чĕнĕвне хапăл тусах йышăннă, вăл пĕтĕм пуху умĕнче Гальăпа пĕрле Братск ГЭС-не тунă çĕре кайма сăмах панă. Галя çав тери савăннă.

Çĕпĕрти стройкăсене кайма сула пуçтарăнмалли вăхăт çитсен, çамрăк инженер йăлтах улшăнса кайнă.

— Эпĕ Çĕпĕр тайгинчи упасемпе кÿршĕллĕ пурăнма институт пĕтермен,—тенĕ вăл юлашкинчен,—çич-сакăр класс пĕтерменсем кайччăр...

— Хамăр юлташсем çине вара мĕнле куçпа пăхăпăр-ха?—ыйтнă Галя.

— Хам сăмахшăн эпĕ хамах ответ тытăп,—сивĕн татса хунă инженер,—сана вăн каяс килсен—эсĕ кай,—пире иксĕмĕре никам та пĕрле çыхса хуман...

Галя умне ăлĕкхи юратнă упăшка вырăнне темĕнле ют çын тухса тăнă, апла пулсан та Гальăн малтанхи çирĕп юратăвĕ часах сÿнесшĕн пулман, вăл татах темо кĕтнĕ...

Гальăна станцăра ватă амăшĕпе юлташĕсем ăсатса янă, упăшки унта пыман та...

Малтанхи юрату çапах та сÿнесшĕн пулман, Гальăна вăл Падун тайгинчи палаткăра та аса килнĕ. Çавăнпа куççуль тумланă та ĕнтĕ фотоÿкерчĕкĕн çĕмĕрĕлнĕ кантăкĕ çине.

— Ман çине тĕлĕнсе пăхса ан тăрăр-ха, хĕрсем, пĕрех хутчен, юрлама пуçлăр,—тенĕ вара вăл, урайне шăлма тытăнса.

Хĕрсем малтан шăппăн кăна, кайран вăйлăрах сасăпа юрлама пуçланă. Чăваш хĕрĕсен юрри палаткăран тухнă, унтан тайга ăшнелле кĕрсе кайса çухалнă.

Пÿрт умĕнчи садра шап-шурă çĕмĕрт,
Çил вĕрнипе вĕçессĕ çеçкесем.
Шыв леш енче, паллакă сасă евĕр,
Çĕр касиччен юрлассĕ шăпчăксем...

Палатка умĕнче шурă юр вĕрчĕсем выртнă, анчах вĕсем халь хĕрсене шурă çĕмĕрт тĕмĕсем пек туйăннă. Юрланăçемĕн вĕсене Шупашкарти суркунне, Атăл шывĕн кăвак хумĕсем аса килнĕ.

Вара хĕрсем пурăнакан палаткăран кашни каçах чăваш юррисем илтĕнме пуçланă. Кÿршĕ палаткăри рабочисем çав хĕрсене «тайгари шăпчăксем» тесе ят панă, вĕсен палаткине «Шупашкар палаткин» теме пуçланă...

Çĕпĕрти шутсăр сутă хĕвеллĕ суркунне те çитнĕ. Тайгара пăртан тасалнă Ангара Падун шарлакĕсем çинче шавлани илтĕнсе тăнă. Вăл вăхăт тĕлне Ангара çыранĕсем çинче чăн-чăн поселоксем ÿссе ларнă.

Суркуннепе, тайгари кăвак пек хĕрлĕ тĕслĕ «огоньки» текен чечексем çеçке сарнă вăхăтра Гальăн виçĕ юлташĕ те качча тухнă.

Сурхи кунсем Гальăна Шупашкарти чи телейлĕ вăхăтсене аса илтернĕ. Упăшки те час-часах аса килме пуçланă, анчах унтан ку таранччен те пĕр çыру та пулман.

Пĕррремĕш çыру Галя çĕнĕ çуртри уйрăм хваттере куçнă кун килнĕ. «Унта лайăх хваттер тупăнсан—йышăнма тăрăш, тен, эпĕ те унта куçса пырăп»,—тенĕ инженер çав çырура... Вăл çыру Гальăна савăнтарнă та, хурлантарнă та...

— Енчен, упăшки килес пулсан, Галя хăй патне кÿртĕ-ши?—ыйтрĕ манран Надя юлашкинчен, Галя çинчен каласа пĕтерсен.

Эпĕ, шухăша кайнăскер, нимĕн те ответлеймерĕм.

— Эсир, арçынсем, хытăрах чунлă çав,—терĕ вара вăл.—Тен, инженер вăхăтлăха кăна йăнăшнă? Тен, Галя ăна халĕ те юратать? Вара мĕн тумалла?

— Юратать пулсан—хăйĕн ирĕкĕ,—терĕм эпĕ ним калама аптраса.—Юратать пулсан—йышăнтăрах вара упăшкине... Эпир ăна нимĕнле канаш та параймăпăр...

Надя ман çине çилленчĕк куçĕсемпе пăхса илчĕ. Çакăн хыççăн эпĕ темиçе кун хушши унпа тĕл пулса калаçаймарăм.

Манăн командировка срокĕ те тухрĕ, çав кун эпĕ Надьăна курмасăрах станцăна кайрăм. Поезд çине ларас тенĕ чух мана такам ятран чĕннине илтрĕм те, çаврăнса пăхрăм. Надя иккен. Савăнса ун патне чупса пытăм, анчах унăн сивĕ куçĕсемпе тĕл пулсан, каялла чакрăм.

— Кĕтетĕп,—терĕ вăл ют сасăпа.

— Кама?—ăнланаймарăм эпĕ.

— Упăшкана. Телеграмма ячĕ. Тепĕр пилĕк минутран поезд килет...

Эпĕ нимĕн те чĕнмесĕр тăнине курсан, вăл çапла хушса хучĕ:

— Эпĕ сире Галя çинчен каласа паччĕ. Суя. Хам çинчен пулнă вăл. Сиртен канаш кĕтнĕччĕ... Анчах эпир...

Надя каласа пĕтерейменĕ: станцине поезд килсе кĕчĕ, перрон çине халăх тулчĕ.

— Вăл çитрĕ ĕнтĕ,—терĕ Надя.—Мĕн те пулсан калăр...

Эпĕ нимĕн те калаймарăм.

— Юптăнтăм-çке эпĕ унтан,—терĕ вăл кăштах шухăша кайса тăнă хыççăн.—Чĕре вырăнта мар. Ним тума та пĕлместĕп.

Эпĕ каллех чĕнмерĕм.

Надя ман çине пурнăçра ним тума та пултарайман вăйсăр çын çине хĕрхенсе пăхнă пек пулса пăхса илчĕ те пăрăнса кайрĕ, çынсем хушшине кĕрсе кайса çухалчĕ. Вара эпĕ хам шухăшламан çĕртех Надя кайнă еннелле утрăм, анчах ăна тĕл пулаймарăм.

Ман поезд сигнал пачĕ. Вагона кĕтĕм те, чемоданпа вырăна хунă-хуманах чÿрече патне чупса пытăм. Пушанса юлма пуçланă перрон çинче Надьăна асăрхаса илтĕм. Ăна хирĕç плащ тата шлепке тăхăннă çамрăк арçын тăратчĕ. Эпĕ вĕсен çине лайăххăн курса юлаймарăм, поезд тапранса кайрĕ. Çапах та мана Надя куçĕсенче ăшă вулă тата сутă шанчăк çиçсе тăнă пек туйăнчĕ.

Александр КЛЕМЕНТЬЕВ.

„Германири Коммунистсен партине ан пырса тĕкĕнĕр!“

БОНН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Хĕвеланăç Германири хаçатсен ДПА агентстви пĕлтернипе пичетлесе кăларнă. Унта каланă тăрăх, Карлсруэ хулинче федеральнăй конституционнăй суд августăн 17-мĕшĕнче Германири Коммунистсен партийĕ тĕлĕшпе приговор йышăнмалла тунă.

Çакна май «Фрейес фольк» хаçатра Германири Коммунистсен партийĕн правленийĕн секретариачĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Заявленире вăл нимĕç халăхне Германири Коммунистсен партине ĕçлесе тăма чарасран хÿтĕлесе хăварма чĕнет.

Германири Коммунистсен партийĕ тĕлĕшпе çак приговора, тенĕ заявленире, пурне те тивĕç çар повинноçĕ вăя кĕнĕренне пĕр уйăх иртнĕ хыççăн йышăнма шутлаççĕ. Çакă вăл федеративлă республикăри демократиллĕ, мире юратакан мĕнпур вăйсемшĕн шиклентерекен сигнал пулса тăмалла. Ку вăл нимĕç халăхĕ умне тухса тăнă хăрушлăх ÿсние кăтартса парать. Нимĕç халăхне каллех хĕн-хур сулĕ çине тĕксе кĕртме тăрăшаççĕ.

1933 çулхи событисене, тенĕ заявленире, халăх манман-ха. Ун чухне Германири Коммунистсен партине хĕсĕрленĕ хыççăн профсоюзсене салатса ячĕç, Германири социал-демократсен партине ĕçлесе тăма чарчĕç, фашизм кăмăлне кайман мĕнпур партисене пусарса лартрĕç.

Çавăнпа та Германири Коммунистсен партине ĕçлесе тăма чарассине хирĕç кĕрешесси вăл—коммунистсен ĕçĕ кăна мар, вăл пурне те пырса тивет. Эпир Германири социал-демократсен партийĕнчи юлташсене, мĕнпур демократсене, милитаризма хирĕç тăракан мĕнпур çынсене çакăн çинчен аса илтеретпĕр: 1933 çулта коммунистсене арĕстленĕ хыççăн социал-демократсене, буржуалла демократсене, евангелистла христианесене тата католикла пасторсене те тĕрмесемпе концлагерьсене хупса лартрĕç.

Çавнашкал ĕçсем çĕнĕрен пулассине ирсе ямалла. Тĕнчери икĕ вăрçăпа фашистла диктатура опытĕнчен пирĕн халăхăн тивĕçлĕ вывод тумалла: халех кĕрешме пуçлас пулать. Çавăнпа та эпир пурне те Карлсруэ хулинчи федеральнăй суда пĕр тăхтаса тăмасăрах протестлесе калама чĕнетпĕр. Предприятисемпе профсоюзсенче, пухусемпе организацисенче, уйрăм çынсем хушшинче хăвăрăн çапла каламалла: Германири Коммунистсен партине ан пырса тĕкĕнĕр!

Нимĕçсен демократиллĕ хаçачĕсем пичетлесе кăларнă нумай хыпарсем çакна кăтартса параççĕ: Германири Коммунистсен партине ĕçлесе тăмашкăн чарма хатĕрленнине хирĕç Федеративлă Германи Республикинчи халăхăн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсем, çав шутра Германири социал-демократсен партийĕн, Хĕвеланăç Германири профсоюзсен членĕсем, çамрăксен тĕрлĕ организацийĕсен представителĕсем, Хĕвеланăç Германири интеллигенци представителĕсем протест тăваççĕ.

АФГАНИСТАН КОРОЛĔПЕ ПАКИСТАН ПРЕЗИДЕНЧĔ ПĔРЛЕ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

КАБУЛ, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Кабул хулинче Афганистан королĕ Мухаммед Захир-шахпа Пакистан президенчĕ Искандер Мирза хушшинчи калаçусем вĕçленнĕ.

Пĕрле пичетлесе кăларнă заявленире, уйрăммăн илсен, икĕ çĕршыв пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса, килĕштерсе ĕçлени кирлине палăртнă, икĕ çĕршыв хушшинчи мĕнпур хирĕçÿсене пĕрле туслă калаçусем ирттерсе йĕркелеме йышăнни çинчен каланă.

Пакистан президенчĕ Афганистан корольне Мухаммед Захир-шаха Пакистана пыма чĕннĕ. Король çак чĕнĕве йышăннă.

Паян ирхине Искандер Мирза Кабултан Карачие тухса кайнă.

Болгарипе Чехословаки правительствисен заявленийĕсем

СОФИЯ, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Египет правительстви Суэц каналĕн компанине национализацилесси çинчен решени йышăннă май Болгари Халăх Республикин правительстви çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă.

Египет правительстви Египет территорийĕнчи Суэц каналĕн компанине национализацилени тĕнчери халăхсен прависен принципĕсемпе, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕпе тата ООН Генеральнăй Ассамблейи 1952 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă резолюципе пĕтĕмпех килĕшсе тăрать.

Египет территорийĕнче Египет халăхĕ ĕçлесе тунă Суэц каналĕ Египет республики аллинче пулмалла. Çапла ĕнтĕ, канала национализациленипе вăл пĕтĕмпех законлă, Египет республикин суверенлăй прависенчен килекен ĕç пулса тăрать.

Хăшпĕр çĕршывсенче каланă тăрăх, Суэц каналне национализацилени ун тăрăх судносем çÿретес ĕçе чăрмантарать имĕш. Болгари правительстви çакăн пек шикленсе шухăшлама нимĕнле сăлтав та çук тесе шутлать. Египет правительстви çапла пĕлтерчĕ: канал тăрăх судносем ирĕклĕ çÿретес тĕлĕшпе 1888 çулта тунă конвенцие вăл пăхăнать, канал сооруженийĕсене йĕркеллĕ тытать, канал тăрăх грузсем турттарассине, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи суту-илĕве йĕлатма май паракан ĕçсем туса ирттерет.

Суэц каналĕ тăрăх судносем çÿретес йĕркене çыхăннă мĕнпур ыйтусене татса панă чухне çак канала национализациленине ялан асра тытас пулать. Суэц каналĕн компанине национализациленине пăрахăçа кăларма хăтлани вăл Египетăн шалти ĕçĕсене хутшăннипе пĕрех пулать.

Совет правительствин заявленийĕнче çапла каланă: тĕнчери çĕршывсемшĕн пысăк вырăн йышăнса тăракан тинĕс каналĕсемпе проливĕсем тăрăх судносем çÿретес ирĕклĕх çинчен тăракан ыйтусене Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче, унăн принципĕсемпе тата Уставĕпе килĕшÿллĕн сÿтсе явни тĕрĕсрех пулать. Çапла каланипе Болгари правительстви пĕтĕмпех килĕшет. Ыйтăва Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн тулашĕнче пăхса тухнă чухне çак ĕçе интересленекен мĕнпур государствăсем хутшăнмалла. Суэц ыйтăвĕ Болгари Халăх Республикине те интереслентерет, мĕншĕн тесен Болгарипе чылай çĕршывсем хушшинчи çыхăнусенче Суэц каналĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Болгари Халăх Республикин çавăн пек конференцие хутшăнма право пур.

Болгари правительстви çакна шанса тăрать: Суэц каналĕн компанине национализациленĕ хыççăн тухса тăнă мĕнпур ыйтусене татса панă чухне Египет республикин законлă интересĕсене, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери мирĕ сыхлас тата çирĕплетес интересене шута илĕç.

* * *

ПРАГА, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки телеграф агентстви Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Чехословаки правительстви тунă заявление пичетлесе кăларнă. Заявленире çапла каланă: Египет правительстви Суэц каналĕн компанине национализациленине Чехословаки правительстви пĕтĕмпех законлă ĕç тесе шутлать.

Великобританипе Франци правительствисен ĕçĕсем вара, тенĕ заявленире, пачах урăхла. Вĕсем Египет правительстви хăйĕн решенине улăштартăр тесе ăна хĕсме тăрăшаççĕ. Вĕсен çак ĕçĕсем пачах вырăнсăр. Пурте пĕлеççĕ, Египет правительстви Суэц каналĕ тăрăх судносене ирĕклĕ çÿреме кирлĕ условисем тума сăмах пачĕ.

Кăçалхи августăн 16-мĕшĕнче Лондонра пухакан конференцие илес пулсан, Чехословаки правительстви Совет правительствин сĕнĕвне ырлать. Çак сĕнÿре конференцие Суэц ыйтăвĕпе интересленекен ытти государствăсене те чĕнесси çинчен каланă.

Чехословаки республики, тенĕ заявленин вĕçĕнче, Суэц каналĕпе усă куракан государствăсенчен пĕри пулса тăрать. Ун карапĕсем канал тăрăх çултан-çул нумайрах та нумайрах çÿреççĕ. Çавăнпа та Чехословаки республикин правительстви, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕпе килĕшÿллĕн мĕнпур халăхсем мирлĕ пурăнассине, пĕр-пĕринпе туслă çыхăнусем тытассине вăйлатма пулăшас тесе, çакăн пек требовани лартать: 1956 çулхи августăн 16-мĕшĕнче Лондонра пухăнакан конференцие Чехословаки правительствине те чĕнмелле.

Арабсен çĕршывĕсем Египет сĕнĕвне ырлаççĕ

КАИР, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). МЕН агентстви çапла пĕлтерет: 1888 çулта тунă конвенцие çĕнĕрен пăхса тухма, Суэц каналĕ тăрăх судносем çÿретес ирĕклĕхе çирĕплетсе гарантилеме интересленекен государствăсен конференцине пухасси çинчен Египет правительстви панă сĕнĕве арабсен çĕршывĕсем ырлаççĕ.

Арабсен çĕршывĕсен лигин политика комитечĕ ĕçленĕ май Судан ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мухаммед Ахмед Махгуб Каира пынă. Судан правительстви Египет сĕнĕвĕпе килĕшет, тенĕ вăл.

Арабсен çĕршывĕсен лигин политика комитечĕн сессине пынă Ирак делегацийĕн пуçлăхĕ Тевфик Сувейди çапла каланă: Насер президентăн сĕнĕвне Ирак пĕтĕмпех ырлать, ку сĕнÿ ыйтăва татса памалли лайăх никĕс пулса тăрать, тесе шутлать.

Иордани ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Абдул-Хади те çавăн пекех каланă, Египет сĕнĕвне Иордани ырлать, тенĕ.

Йемен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ тата государство министрĕ Эль-Амри çапла каланă: Насер президент Суэц ыйтăвĕпе интересленекен государствăсен конференцине пухасси çинчен панă сĕнĕве Йемен арабсен мĕнпур çĕршывĕсем пекех ырлать.

Ливанăн государство министрĕ Саиб Салам та Египет сĕнĕвне ырласа каланă, пухма сĕнекен конференцие Ливан хутшăнĕ, тенĕ.

Египетăн законлă прави

ПАРИЖ, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рабатран çапла пĕлтернĕ: Мароккăри радиостанци тăрăх Марокко ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ Суэц каналĕ пирки тунă заявление вуласа панă. «Эпир,—тенĕ вăл,—Суэц каналĕн компанине национализациленине Египетăн законлă прави пулса тăрать тесе шутлатпăр... Египет правительстви Суэц каналĕ тăрăх судносем çÿретес ирĕклĕхе гарантилеме сăмах пачĕ. Çавăнпа та эпир канала национализациленĕ пирки тухса тăнă ыйтусене мирлĕн, Египета вăйпа ирĕксĕрлемесĕр татса парĕç тесе шанса тăратпăр».

СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Д. Т. Шепилов Лондона пырса çитнĕ

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Паян вырăнти вăхăтпа 16 сехет те 25 минутра Совет делегацийĕ Лондона пырса çитнĕ. Суэц ыйтăвĕ пирки пухма палăртнă конференцие хутшăнакан çак делегацие СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Д. Т. Шепилов ертсе пырать.

Лондон аэропортĕнче делегацие ют çĕршыв ĕçĕсен государство министрĕ Рединг лорд, ССР Союзĕн Англири вăхăтлăх повереннăйĕ А. А. Рощин тата ытти çынсем кĕтсе илнĕ.

ĔÇÇЫННИСЕН ПУРНĂÇНЕ ЛАЙĂХЛАТМА

ПЕКИН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Китайри апат-çимĕç промышленноçĕ туса кăларакан пĕтĕм продукци хисепĕ 1952 çулхи шайран 70 процент иртсе кайнă. Кăçал 45 пин тонна консерв туса кăлараççĕ. Ку вăл 1955 çулхинчен 54 процент нумайрах пулать. Сахăр туса кăларасси 900 пин тоннăна çитĕ, урăхла каласан, иртнĕ çулхинчен 24 процент чухлĕ ÿсет. Ÿсентăран çăвĕ 1 миллион та 35 пин тонна туса кăлараççĕ. Çакă вăл иртнĕ çулхинчен 15 процент нумайрах пулать. 1955 çулхипе танлаштарсан табак-пирус, супăнь, сăра, тата ытти япаласем туса кăларасси те чылай ÿсет.

Пĕрремĕш пилĕк çуллăх планра апат-çимĕç промышленноçĕнче 22 предприяти тума палăртнă. Çав шутран кăçал 13 предприятие ĕçе яраççĕ. Вĕсем ĕçлеме тытăннă хыççăн апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларасси татах та ытларах ÿсет.

Çавăн пекех автоматла ручкăсем, аккордеонсем, çĕвĕ машинисем, хут, велосипедсем, сехетсем, фотоаппаратсем, савăт-сапа туса кăларасси нумай ÿсмелле. Çак таварсене иртнĕ çулхи малтанхи ултă уйăхринчен 50 процент нумайрах сутнă.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ КОРЕЯ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ХАКСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ЙÿНЕТНĔ

ПХЕНЬЯН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республики министрĕсен кабинечĕ халăха кирлĕ таварсен ваккăн сутмалли хакĕсене çĕнĕрен йÿнетесси çинчен постановлени йышăннă.

Августăн 14-мĕшĕнчен пуçласа чылай апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли хакĕсем 10 процентран пуçласа 50 процент таран йÿнелессĕ.

БЕЛЬГИ ШАХТИНЧЕ ИНКЕКЕ ЛЕКСЕ ВИЛНĔ ÇЫНСЕНЕ ПЫТАРНИ

ПАРИЖ, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Марсинель хулинче (Шарлеруа çывăхĕнче) ишĕлсе аннă шахтăра вилнĕ çынсен шутĕнчен ултă горняка пытарнă. Вĕсене пытарнă çĕре 150 пин çынна яхăн пуханнă, çав шутра профсоюзсемпе ытти организацисен делегацийĕсем пулнă. Вилнисен юлташĕсем алăра шахтер лампочкисем тытса пынă.

Ĕнер пĕтĕм Бельгире хурлăх кунĕ пулнă.

Шахтăра хупланса юлнă 179 çынна çăлса хăварас тĕлĕшпе халĕ те ĕçлеççĕ, анчах вĕсене хăтарма шанчăк сахал, мĕншĕн тесен горнякĕсем питĕ тарăнта, шахтăра халĕ те пушар кĕрлет. Çăлса хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен командăсем ĕнер 835 метр тарăнăшĕнчи пĕр галерейăна шăтарса кĕнĕ, унтан 80 горняк виллине илсе тухнă.

Канашри вагонсем юсакан заводри 22-мĕш ача çурчĕ çу кунĕсене Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра ирттерет.
Ÿкерчĕк çинче: ачасем вăйăра.

Ф. Иванов фотоÿкерчĕкĕ.

Комсомол шанăçне тÿрре кăларма пулаççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). ВЛКСМ райкомне Донбаса яма ыйтса кулленех нумай çамрăксем пыраççĕ. Кĕске вăхăт хушшинче 27 çамрăк заявленисем панă. Вĕсем хушшинче Микоян ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем Кузьма Егоров, Петр Лукин, Петр Иванов т. ыт. те.

«Эпĕ çĕр кăмрăкĕ хамăр Тăван çĕршыва çăкăр пекех кирлине пĕлетĕп. Комсомолăн Центральнăй Комитечĕ Донбаса кайма чĕннĕ вăхăтра эпĕ аякра тăма пултараймастăп. Çавăнпа мана Донбаса яма ыйтатăп. Комсомол шанăçне тÿрре кăларма пулатăп», тесе çырать хăйĕн заявленийĕнче Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз членĕ Степан Ярговский.

Чăваш комбайнерĕсем—Семипалатинск облаçĕнче

Семипалатинск облаçĕнчи колхозсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул çитĕнчĕ. Облаçри ялхуçалăх ĕçченĕсем государствăна заданирен ирттерсе 6,2 миллион пăт, пĕтĕмпе 22 миллион пăт тырă пама обязательство илнĕ.

Семипалатинск облаçĕнчи вăйлă тырпула пухса кĕртме пулăшма Украина, Азербайджан ССР-ĕсенчен, Ставрополь облаçĕнчен çамрăксем килнĕ. Чăваш республики 50 комбайнер янă. Механизаторсем ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Галкин, Дидькин комбайнерсем нормăна планах ирттерсе тултараççĕ.

Е. ЮДИН.

Вăтам шкултан—колхоз производствине

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăва вăтам шкулĕнчен кашни çулах 55—60 çамрăк вĕренсе тухать. Вĕсенчен хăшпĕрисем аслă шкулсене вĕренме каяççĕ, чылайăшĕ колхозрах ĕçлеме юлаççĕ.

Вăтам шкул территоринче кĕрекен Мичурин ячĕпе тăракан колхозра халĕ вăтам шкултан вĕренсе тухнисем вунпарăн ĕçлеççĕ. Вăтам шкул пĕтернĕ çамрăксем хăйсен ĕçĕсене лайăх туса пыраççĕ. Акă, Ольга Кадышова колхозницăн виçĕ хĕрачи—Александра, Олимпиада, Галина тата Гаврил Иванов колхозникăн икĕ хĕрачи—Анна, Маргарита вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Вĕсем колхоз производствине активлăн хутшăнаççĕ.

Алексей Якимов комсомолец та иртнĕ çул вăтам шкул пĕтернĕ. Унăн ашшĕ колхозра паллă платник шутланать. Алексей халĕ ашшĕпе пĕрле платник пулса ĕçлет.

А. Смолин çамрăк та, вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, колхозра ĕçлеме юлчĕ. Вăл колхоз производствинче пĕтĕм пултарулăхне кăтартса ĕçлет.

В. НАУМОВ.

Кирпĕч тăвас ĕçе механизацилерĕç

СОВЕТСКИ. Буденный ячĕпе тăракан колхозри кирпĕч тăвакансен бригадине 15 çул хушши пĕр улшăнмасăр Иван Барышев колхозник ертсе пырать. Çав вăхăт хушшинче бригада колхоза пĕр миллион тенкĕ ытла тупăш панă. Выльăх-чĕрлĕх фермисен никĕсĕсене, овощехранилищесене, силос сооруженийĕсене тата ытти чылай çурт-йĕрсене кунта кирпĕчрен тунă.

Халĕ кирпĕч производствинчи йывăр ĕçсене механизацилесе çитерчĕç. Çапла туни ĕç тухăçлăхне 2,5 хут ÿстерме май парать. Сăмахран, иртнĕ çул 20 çын 200 пин кирпĕч туса хатĕрленĕ пулсан, кăçал 10 çын 500 пин кирпĕч тума пултарать. Кăçал 200 пин кирпĕче яхăн тунă, 100 центнер известь хĕртсе кăларнă.

Бригада членĕсем И. Григорьев, О. Суворова, И. Бородина, Н. Игнатьев, Т. Волков, Н. Соловьев тата И. Максимов кулленхи ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ.

Производство планĕ тăрăх малашне колхозри выльăх-чĕрлĕх фермисен çурчĕсене, пурăнмалли çуртсемпе учрежденисене пĕтĕмпех кирпĕчрен тума палăртнă.

Н. ЕГОРОВ.

Вут-кăвартан сыхланас ĕç

ЭЛĔК. Тавăт ял Совет исполкомĕ юлашки çул вут-кăварпа кĕрешес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Хальхи вăхăтра ял Советĕнче пушар насусĕ—8, вĕсенчен 4-шĕ выльăх-чĕрлĕх фермисем патĕнче тăраççĕ. Колхозсенче 5 автомашина. Вут-кăвар тухас пулсан, вĕсене пурне те пушарпа кĕрешес ĕçре усă курма палăртнă. Пушар сарайĕсенче талăкĕпех 3 çынтан дежурство организациленĕ. Кашни бригадăрах черетпе хурала тухассине йĕркеленĕ. 10 вырăнта сигналсем тунă. Вут-кăварпа кĕрешес ыйтăва ял Совечĕн сессийĕнче, колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе явнă. Пушартан сыхланма чĕнекен лозунгсемпе плакатсене ялсенче курăнмалли вырăнсене çыпăçтарса тухнă. Шверник ячĕпе тăракан колхозра 50 çынтан тăракан ирĕклĕ пушар дружини ĕççыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне аван туса пырать.

Пушарсенчен сыхланас ĕçре пĕвесем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавна май кăçал Шверник ячĕпе тăракан колхоз çĕнĕрен 6 пысăк пĕве тунă, 15 пĕве юсанă. Пушар сарайне çĕнĕрен тунă.

П. ТЕРЕНТЬЕВ.

ПЫСĂК ВЫЛЯВ

ВĂРНАР. Çĕрпелĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ М. Кузьмин юлташ çак кунсенче районти перекет кассине СССР халăх хуçалăхне юсаса аталантармалли тăваттăмĕш государство заемĕн пĕр облигацине илсе килчĕ. Ун çине 14-мĕш выляври 50 пин тенкĕ выляш ÿксе тухнă.

В. МАКСИМОВ.

Радиопа паракан передачăсем

Вырăнти вăхăтпа

Августăн 16-мĕшĕнче

18.50—«Совет шкулĕ улттăмĕш пилĕкçуллăхра» ятлă калаçу. 19.15—Армени композиторĕ А. Бараджанян произведенийĕсенчен йĕркеленĕ концерт.

Августăн 17-мĕшĕнче

18.50—шкул çулне çитмен ачасен передачи. «Çарăк» юмах тăрăх хатĕрленĕ инсценировка. 19.05—ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем валли хатĕрленĕ передача. 19.25—ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем валли хатĕрленĕ концерт.

Августăн 18-мĕшĕнче

18.20—«Атом энергийĕпе транспортра усă курасси» ятлă калаçу. 18.40—тĕнчери лару-тăру çинчен статья. 18.55—А. П. Чехов çырнă «Усал шухăшлă çын» ятлă калав тăрăх йĕркеленĕ инсценировка. 19.10—эстрада концерчĕ.

Августăн 19-мĕшĕнче

17.00—Г. Мухтаров çырнă «Семье чысĕ» пьеса тăрăх йĕркеленĕ радиомонтаж.

Августăн 20-мĕшĕнче

8.20—«Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх Выставкин участникĕсен опычĕ» циклпа передача. 8.40—Совет Союзĕнчи халăхсен юррисем. 18.50—«Хатĕр пул» радиожурнал. 19.10—тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх хатĕрленĕ передача. 19.25—Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕн М. Денисовăн концерчĕ.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиади

Августăн 13-мĕшĕнче В. И. Ленин ячĕпе тăракан Центральнăй стадионра ядро ывăтас тĕлĕшпе юлашки ăмăртусем пулса иртнĕ. Акă, пирĕн çĕршыв чемпионĕ тата рекордсменĕ Вартан Овсепян. Халиччен вăл 17 метр та 28 сантиметра ывăтнă. Халĕ мĕнле пулĕ-ши? Курма пынă çынсем çав тери интересленсе пăхаççĕ.

— Вартан Овсепян 17 метр та 35 сантиметра ывăтрĕ,—тесе пĕлтерет диктор.

Армени спортсменĕн çак результачĕ Европăра иккĕмĕш вырăнта тăрать. Европа рекордне Чехословаки спортсменĕ И. Скобла тунă. Вăл ядрона 17 метр та 54 сантиметра ывăтнă.

Хĕрарăмсем хушшинче сăнă ывăтас тĕлĕшпе юлашки ăмăрту пулса иртнĕ. Паллă спортсменка, спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ А. Чудина (Мускав) пуринчен те инçетерех ывăтнă. Унăн результачĕ—52 метр та 16 сантиметр. Иккĕмĕш вырăнта Украина представительници Н. Конаева—50 метр та 90 сантиметр. Виççĕмĕш вырăна Латви спортсменки И. Яунсем йышăннă. Вăл сăнна 50 метр та 84 сантиметра ывăтнă.

Барьерсем лартса тухнă çулпа 110 метр хушшине пуринчен те хăвăртрах чупса тухса, Ленинград спортсменĕ Б. Столяров Совет Союзĕн спартакиада чемпионĕ ятне илнĕ.

5.000 метрлă дистанцире 15 çын ăмăртса чупнă. Ăмăртура пирĕн чи хăвăрт чупакан спортсменсенчен пĕри В. Куц (Мускав) мала тухнă. Ăна чечексемпе кĕтсе илнĕ. Куц спартакиадăра иккĕмĕш ылтăн медаль илнĕ. 5.000 метра вăл 13 минут та 42,2 секундра чупса тухнă. Иккĕмĕш вырăна Украина представителĕ И. Чернявский йышăннă.

Августăн 13-мĕшĕнче йывăр хăвăрт ишекенсен юлашки ăмăртăвĕ пулнă. 400 метрлă дистанцире Эстони спортсменки Ульви Воог çĕнтернĕ. Çак хушша вăл 5 минут та 19,7 секундра ишсе тухнă. Ку вăл Совет Союзĕн çĕнĕ рекорчĕ.

Иккĕмĕш вырăна Ленинград спортсменки А. Павлова йышăннă. Вăл 5 минут та 30,4 секундра ишсе тухнă. Виççĕмĕш вырăнта—Мускав физкультурници Н. Крюкова.

Унтан арçынсем 1.500 метр хушши ишсе ăмăртнă. Çак ăмăртура Львов хулинче 10-мĕш класра вĕренекен спортсмен Г. Андросов мала тухнă. Совет Союзĕн спартакиада чемпионĕ ятне илнĕ.

Арçынсем хушшинче хăвăрт ишекенсен комбинированнăй эстафети пуçланать. Дистанци—4×100 метр. Ăмăртура Ленинград спортсменĕсем çĕнтернĕ. Вĕсен вăхăчĕ 4 минут та 25,5 секунд.

Хăвăрт ишекен командăсем хушшинчи ăмăртусенче Ленинград спортсменĕсем мала тухнă. Мускав команди иккĕмĕш вырăн йышăннă. Виççĕмĕш вырăнта—Украина команда, тăваттăмĕш вырăнта—РСФСР, пиллĕкмĕш вырăнта—Эстони, улттăмĕш вырăнта—Грузи командисем.

Августăн 13-мĕшĕнче иккĕмĕш çурма-финал матчĕнче Мускавпа Ленинград футболисчĕсем тĕл пулнă. Вăйăра Мускав спортсменĕсем 3:2 шутпа çĕнтернĕ.

Çапла ĕнтĕ, августăн 16-мĕшĕнче футболистсен юлашки ăмăртăвне Мускавпа Грузи командисем хутшăнаççĕ.

* * *

ССР Союзĕнчи халăхсен спартакиадине пресс-бюро ĕçлет. Вăл совет журналисчĕсемпе урăх çĕршывсен корреспонденчĕсене интересленетерекен сведенисем парать. Совет Союзĕн мĕнпур районĕсенчен, урăх çĕршывсенчен кашни кунах спортсменсен ăмăртăвĕсем çинчен, çĕнĕ рекордсем çинчен пĕлтереççĕ.

Спартакиада мĕнле пыни çинчен пирĕн çĕршывпа урăх çĕршывсен журналисчĕсем—пурĕ 700 çын ытла — спартакиада мĕнле пыни çинчен пĕтĕм тĕнчене пĕлтерсе тăраççĕ. Мускавра республикăсемпе облаçсенчи хаçатсен кăна мар, хуласемпе районсенчи хаçатсен сотрудникĕсем те пынă.

* * *

Августăн 14-мĕшĕ—спартакиадăри ăмăртусен вунпăмĕш кунĕ. Ленин ячĕпе тăракан Центральнăй стадионăн спорт аренинче чи лайăх спортсменсем хăвартнă ялав вунпăмĕш кун ĕнтĕ вĕлкĕшет. Тепĕр икĕ кунтан спартакиада хупăнать.

Халĕ Центральнăй стадионра тата Мускаври ытти спорт сооруженийĕсенче çăмăл атлетика, баскетбол, классикăлла кĕрешÿ, велосипедистсен спорчĕ, шыври поло, пăшалсемпе тĕл перес, кучухнехи пятиборье, фехтовани енĕпе ăмăртусем пыраççĕ. «Динамо» обществин шыв станцийĕнче байдаркăсемпе тата каноэсемпе чи хăвăрт ишекенсем ăмăртаççĕ. Çĕршыв чемпионĕн ятне илессишĕн футболистсем хушшинче пыракан ăмăртусене курма пыракансем халиччен нихçан пекех нумай.

Çурма вăтам виçеллĕ йывăр атлетсен ăмăртăвĕнче Ленинград спортсменĕ, спорт мастерĕ Федор Богдановский пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ рекорд тунă. Икĕ алăпа вăл 134 килограмм йывăрăш штанга çĕкленĕ.
Ÿкерчĕк çинче: Ф. Богдановский ăмăрту вăхăтĕнче.

Н. Сидников фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Мускав спортсменĕсем çав-çавах малта пыраççĕ. Вĕсем 408,5 очко пухнă. Вĕçленнĕ ăмăртусем енĕпе вĕсем пĕрремĕш вырăн йышăнса тăраççĕ, вĕçленмен ăмăртусем енĕпе—иккĕмĕш вырăнта.

Командăсем хушшинчи ăмăртусен результачĕсем тĕлĕшпе илсен, иккĕмĕш вырăнта РСФСР сборнăй команди пырать, виççĕмĕш вырăнта—Украина команди.

Августăн 13-мĕшĕнче каçхине «Динамо» стадионĕнче боксерсен финалти ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ. ССР Союзĕн спартакиада чемпионĕ ятне çаксем илнĕ: Ленинград боксерĕ В. Стольников (чи çăмăл виçе), Мускав представителĕ Б. Степанов (çăмăл виçе), А. Засухин (çурма çăмăл виçе) — РСФСР сборнăй команди, Мускав боксерĕ Н. Смирнов (çăмăл виçе), В. Енгибарян (пĕрремĕш çурма вăтам виçе) — Армени команди, Э. Борисов (иккĕмĕш çурма вăтам виçе)—РСФСР сборнăй команди, Мускав спортсменĕ А. Коромыслов (пĕрремĕш вăтам виçе), Ленинград представителĕ Г. Шатков (иккĕмĕш вăтам виçе).

Командăсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Ленинград боксерĕсем йышăннă. Иккĕмĕш вырăнта—РСФСР спортсменĕсем, виççĕмĕш вырăнта Мускав боксерĕсем.

Кучухнехи пятиборье енĕпе ăмăртусем вĕçленсе пыраççĕ. Хальхи вăхăтра И. Новиков малта пырать.

Вышкăсем çинчен шыва сикес тĕлĕшпе пулса иртнĕ ăмăртусенче хĕрарăмсем хушшинче Европа чемпионки Т. Каракашьянц (Мускав) çĕнтернĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене те столица представителĕсем — Л. Жигаловăпа М. Цуцкова йышăннă.

Шыва сикес тĕлĕшпе ăмăртусем вĕçленнĕ. Пĕрремĕш вырăнсене пурне те Мускав спортсменĕсем йышăннă. Вĕсем командăсен ăмăртăвĕсенче те мала тухнă. Иккĕмĕш вырăна РСФСР сборнăй команди йышăннă. Виççĕмĕш вырăнта—Украина команди, тăваттăмĕш вырăнта—Ленинград, пиллĕкмĕш вырăнта — Грузи, улттăмĕш вырăнта — Азербайджан, çиччĕмĕш вырăнта—Белоруссин командисем.

Баскетбол енĕпе хĕрарăмсен командисен юлашки ăмăртăвĕсем уменхи ăмăртура Мускав баскетболисткисем Литва спортсменкисемпе тĕл пулса выляннă. Мускав команди 57:56 шутпа çĕнтернĕ. Халĕ спартакиадăри ăмăртусенче унтан иртсе каймалли пултаракан команда çук. (ТАСС).

КИНО

«РОДИНА». Августăн 16-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче илемлĕ фильм «Свадьба с приданым», каçхи сеанссенче — «Есть такой парень».

Вăрнар райпотребсоюзĕ организацисене, колхозсене, уйрăм çынсене çакăн çинчен пĕлтерет: Пĕпреç тата Вăрнар вăрман хуçалăхĕсен кварталĕсенчен илсе тухман йывăççене 1956 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕччен параççĕ. Çак срок иртсен нимĕнле претензи те йышăнмаççĕ тата укçине каялла тавăрса памаççĕ.

ПРАВЛЕНИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-09, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

КТ 00887. Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2419. Тираж 29.600 экз.